К83.3(=4ув)6
Э55
И-48511

ЭЛЯ ЭЛЬФ

# Кирлĕ çивĕч СĂНАРСЕНЕ хаклани

*Критика статьисен пуххи*

*4-мĕш кĕнеке*

Шупашкар 2016

Национальная библиотека ЧР
4-048511

Рос.- Чув.) – 6
В 55

Элиза Ивановн
необхо... ...
критических статей)

Проверено 21 МАР 2017

4-48511

...циональная библиотека
...шской Республики

К Ч23.39(=Чув)6
В55

# Сăнарăн та хакĕ пур

Пур япалан та, çавăн пекех сăнарăн та хакĕ пур. Манăн ĕçĕн сăнарĕсене хакланишĕн пурне те тав тăватăп. Акă мĕнле хаклаççĕ вĕсене паллă та ăста, чаплă ята тивĕçнĕ чăваш çыравçисем.

Нестерова Зоя Алексеевна пысăк стажлă педагог тата Правительство Хисеп хутне тивĕçнĕ çыравçă, нумай ача-пăча кĕнекисен, тĕрлĕ повеçсен сăмахран «Кĕл айĕнчи кăвар» 2002 çулта 3-мĕш номерти «Ялавра» кун çути курчĕ тата «Арçынсем те макăраççĕ» документаллă пысăк романăн авторĕ. Кĕнеки Чăваш кĕнеке издательствинче тухнă. Романра вăл хăйĕн хаклă та юратнă мăшăрĕн пурнăçне сăнарласа çырса панă. Денис Гордеев темшĕн-çке малтанхи вариантне кĕскеттернĕ. Эпĕ шутланă тăрăх унта нимĕн кĕскетмелли те çукчĕ. Унта пĕтĕмпех чăнлăх сюжечĕ пулнă тата çыравçă илĕртмелле çырса кăтартнă тайга вăрманĕ – ўсен-тăранĕ, çавăн пекех тĕлĕнмелле хитре пейзаж – сăнарланă сăмахлă ўкерчĕклĕ çанталăк. Вăл çырнине вуланă чухне ун хыççăн ўкерме пĕлмесĕрех хитре сăнарлă картина-пейзаж пулса тухать.

Акă илсе вулар-ха Зоя Алексеевна çырнă «Кĕл айĕнчи кăвар»повеçри сыпăкран хăш-пĕр пĕчĕк сăнарсене çеç.

*Лăпăс усăннă пиçĕ Туратсем каллех унталла-кунталла сулкаланса илчĕç, симĕс çулçăсем хуллен тем пăшăлтатрĕç. Роман Григорьевич ларчĕ, пирус чĕртрĕ, шухăшлă куçне умра кăваккăн йăлкăшса выртакан шыв çине тĕллерĕ.*

*Атăл, Атăл... Мĕн тери улшăннă, мĕн тери сарăлнă эсĕ. Таçта çитиех вĕçĕ-хĕррисĕр шыв чўхенет. Эпĕ пурăннă чух ун пек марччĕ. Тепĕр çыран çывăхрахччĕ. Унта сарă хăйрлă пляж. Çуллахи шăрăх кунсенче иртен пуçласа каçчен çын хĕвĕшетчĕ. Людăпа çавăнта паллашрĕ Роман.*

Вăт çапла вулакана илĕртме пĕлет прозаик тата хаклавçă та З.А. Нестеровах:

– К. И. Вишневскаян 1994-мĕш çулта шкул çулне çитменнисем валли «Асанне юрри»,
2001-мĕш çулта «Тăм шăхлич»,
çитĕннисем валли «Вăйли пулмĕ тарçă» тата «Чĕн йĕвенсĕр»,
2004 çулта кĕçĕн класрисем валли «Хĕл Мучипе ЮР пике» тата «Тише, мыши», 2006 «Çырла тусĕсем»,
аслисем валли 2005 çулта «Чунлă купăс» поэма,
2006 çулта «Каçхи урам» сăвăсен пуххи тухнă кĕнекисем тата «Вĕре çĕлен» тăвата пайлă трагедийĕ тавра калаçас терĕмĕр.

Клавдия юрри тесе калас килчĕ манăн ача-пăча влли К. И. Вишневская çырнă «Асанне юрри» кĕнекери сăвăсене вуласан. Çав тери илĕртўллĕ хайлав-сăвăсем шкул çулне çитмен ачасем валли. Мухтас килчĕ-ха ман ăна çавăн пек пултаруллă та илемлĕ

сăвăсемшĕн: кашни сăвви юрă пек юрланса вуланать. Вăл çеç-и? Тата шухăшлă та темаллă. Кун пек çырма чăн-чăн поэт пулмалла. Эпĕ хăтланса пăхса сăвă çырма, анчах вăл мана валли мар. Проза ман чуна çывăхрах, хама та ăна çырма ытларах килĕшет. К. Вишневскаяна эпĕ пĕлсех кайман малтанах – чăвашах-ши тесе те шутланăччĕ: вăл пачах хăйне евĕрлĕ вырăсла шухăшласа çырать пек туйăнатчĕ. Курсан вара татах тĕлĕнтĕм вăл хăйне чипер тыткаланинчен, ытла тарăн шухăшлă та ытарлăн калаçнинчен. Кăмăллă – чăн-чăн чăваш та, йăваш та: калаçни çемçе мамăк сасси евĕр, кăшкăрмасăр ерипен илемлĕ чĕлхепе пуплет. Пĕррехинче уявра пирĕнпе юнашар шукăль интеллигентла тумланнă пĕрескер çамрăк арçын, манашкал сăвăçсене палламанни, тăратчĕ:
– Ку кам? Ку артист пуль-ха? Калаçнинченех паллă, – терĕ Клавдияна. Вăл сăнӳкерчĕк ӳкересшĕнччĕ те, анчах вĕсен çамрăк хĕрарăмпа пĕр чĕлхе килмерĕ. Интеллигент кăмăлсăр уйрăлса утрĕ.

Эпĕ педагог пулнă май хама психолог та теме пултаратăп, мĕншĕн тесен ача хăйне епле тыткаланинчен вăл мĕнлине пĕлетĕп. Кунта та çаплах ĕнтĕ – К. Вишневская халĕ аспирантурăран вĕренсе тухнă, пысăкки кайран пулатех. Çак пĕчĕк кĕнекерех вăл темле ыйту та хускатса ача кăмăлне тивĕçтерме пултарнă: арçын ачана вăйлă та паттăр пулма хистет, хĕр ачана амăшĕ пек чипер те ĕçчен пулма сĕнет. Хистет, сĕнет тени те тĕрĕсех мар-ха, çыравçă-сăвăç тĕслĕхĕсене çирĕплетсе ачан мĕнле пулмаллине çавăн пек тесе кăтартать. Вĕсене çырнă чухне вăл Энергетика техникумне пĕтернĕ пулнă, унта экспериментлă аслă математикăна вĕреннĕ. Конкурс пысăк пулин те К. Вишневская, ун чухне вăл Яковлева, шкулта Иванова пулнă, вĕренме кĕрсе технарь пулса тухать. Кăна пирĕн тĕлпулура каласа панăччĕ вăл. Математикăпа физикăна юратмасан, паллах, унта кĕрейместĕн. Шухăша çирĕп тытса пырасси тата ăна вĕçне çити аталантарасси шăпах сăвăç мĕнле çивĕч ăспа шухăшланинчен килетех. Акă илер «Пĕчĕк паттăр» виçĕ куплетлă сăввах. Пĕчĕк ачана паттăр кăтартма вăл мĕн тата мĕнле тунине çырса кăтартма пĕлмелле иккен.

*Пит хăюллă пĕчĕк Ваня,*
*Ярăнать чуччу пĕччен.*
*Мĕн тума унтан вăл анĕ –*
*Киленет чун каниччен.*

*– Ан унтан эс, шăллăм Ваня! –*
*Кăшкăрать ав инçетрен*
*Аслă аппăшĕ ун Таня,*
*Пит хăрать вăл ӳкесрен.*

*Пирĕн Ваня пĕчĕк паттăр,*
*Унăн пысăк ĕмĕт пур.*
*Вăл пуласшăн авиатор,*
*Тыткалать хăйне маттур.*

Пĕррехинче сăвăçсен тĕлпулăвĕнче çырма пуçлакан Нина Пăрчăкан сăвăç Вишневскаяпа иксĕмĕре хăйĕн сăввисене кăтартрĕ. Клавдия çав сăввисене вуланăçемĕн çийĕнчех тӳрлетме пикенчĕ. Кайран вуласа пачĕ:

– Çак хитререх те шухăшлăрах, –терĕм. Эпĕ вара пуçласа юсанипе питĕ килĕшрĕм, мĕншĕн тесен малтан вуланă сăвăран ку улшăнса пуянланчĕ – шухăшĕ те уçăмланчĕ. Ăна сăвă йĕркелесси килĕшсе кайрĕ пулас: пĕрине, теприне пуçларĕ тӳрлетме – хĕрсех кайрĕ, пуçне çĕклемесĕр вулать хăйĕн ентешĕн сăввисене. Çĕнĕ сăвăçăн ĕçне савса пăрахрĕ тейĕн. Юлашкинчен:

– Пирĕн Çĕрпӳ районĕнче пултаруллă сăвăç-пикесем сахал мар-çке. Акă тата хушăнчĕ – маттур çырать, аван юрлать, – терĕ тем туянса хĕпĕртенĕ пек Клавдия Вишневская. Ăна çын çитĕнĕвĕ те кĕвĕçтермест. Вăл чунтан-чĕререн, ача пек, савăннине асăрхарăм. Чăн чунлă поэт кăна çапла савăнма пултарнине эпĕ кĕнекерен мар, хамран та аван ăнланатăп. Пултаруллă çыравçă кăна кĕвĕç кĕвесĕр, никама ăмсанмасăр пурăнма, кирлĕ пулсан пулăшма та пултарать. Тĕлпулура радиора ĕçлекен Людмила Сачкова çыравçă та пурччĕ. Эпĕ ăна:

– Палăртмасан майĕ те çук пуль ку Вишневская сăвăçа? – терĕм кăшт асăрханарах та ыйтуллăрах – патăрьелсемпе пуплеме пĕлмеллине чухласа. Вăл хирĕç пулмарĕ те мана кртитиклеме хатĕрленме хушрĕ.

Чăн та, мĕн калăн, хитре пикене курсан чипер тетпĕр, хитре сăвăсене вара тепĕр чухне асăрхамастпăр та. «Асанне юрри» кĕнеке те капăр та чаплă. Калăпăшĕпе те,палитралăхĕпе те пĕчĕккисене çеç мар, мăннисене те киленмелĕх пур. Сăввисем хăйнеевĕр, кашни именчĕк ача пек, хăйĕнпе интереслентерет: рифмисене те тулли витре пек кашнине тултарса пынă, ритми те уксахламасть; тăри те ахаль кайăк маррине пĕлетĕн виçĕ строфаллă «Тăри» сăвва вуланă май.

*Салам сана, тăр-тăри!*
*Санăн юрру – ĕç юрри.*
*Янкăр таса тӳперен*
*Хресчене вăй-хал кӳрен.*

Апла пулсан ку кайăк уйра ĕç çыннине юрласа савăнтарать çеç мар, ăна ĕç тума та пулăшса хавхалантарать. Кăна вуласа тухсан та кĕнеке страницинчен куçса каяс килмест: самаях шухăша путарать ялта ӳснĕ çынна.

К. Вишневская ачасем валли сăнарлă çырма пултарни çеç мар, сăмахсем кашнинчех çĕнĕ пĕлтерĕшпе илĕртсе вулама хистени пур пек туйăнать. Пĕчĕк ача пек пулса каятăн вуланă чухне.

*Автан пĕрре авăтсан,*
*Пирĕн анне вăранать.*
*Автан тепре авăтсан,*
*Атте тăрса тумланать.*
*Мĕншĕн урăх шарламасть?*
*Манăн ята авăтмасть?*

Кунта та кашни йĕрки ачана çĕнĕ шухăшпа паллаштарать. Ыйтуллă сăмах çыхăнăвĕ ачашăн татах та кăткăс. Экспрессиллĕ майпа та ĕнетерет шухăша автор. Еверлев сăмахĕсене ятарласа шырать тейĕн ача валли, мĕншĕн тесен çыравçă ачан психологине аван ăнланать. Ăна килти выльăхпа паллаштарать, ĕни мĕнле мĕкĕрнине тата вăл мĕнле усăллă выльăх пулнине сăвăри икĕ йĕркене илтнипех ача тавçăрулăхне пуянлатма кирлине туйтăн. Хĕрӳллĕ сăвăра пур сăмах та хĕрет.

*Му-у! Ĕне мĕкĕрет.*
*Ĕне ăшă сĕт парать.*
*У-а-а! Ача макăрать,*
*Сĕт çиесшĕн кармашать.*

Çапла вара кашни сăвви хăйне хăй сăнар çуратать, йĕркерен выляса вулама илĕртет. «Асанне юрри» те çавăн пекех: асламăшĕ мар, Клавдия Вишневская уйăха юрласа ачана пăхма чĕннĕн туйăнать.

*Хĕвел йăмăхса*
*Анчĕ сăрт хыçне.*
*Юрă юрласа*
*Пачĕ асанне.*

*– Çывăрсам, пепкеçĕм,*
*Пĕчĕкçĕ чĕкеçĕм,*
*Урупа тапмасăр,*
*Сасă кăлармасăр.*

*Ялăм шăплансан,*
*Чĕмсĕр уйăх, тух:*
*Чĕппĕм вăрансан*
*Ярăнтарăн, ух!*

Çывăрах-çывăрах, канса ил кăштах, Клавдия. Ывăнтăн та пулĕ икĕ ача амăшĕ: çырма вăхăтне тупма та хĕн ачасене ӳстернĕ чухне, ĕçне те каймалла, çавăнпах, тен, кайран, ачисем шкула кайма пуçласан тин, çырма пуçланă, мĕншĕн тесен ун чухне хальхи пек ĕçлемесĕр ларман ача амăшĕсем. Хĕлле каç вăрăм, çавăн чухне май тупнă пуль çырма?

Хĕллехи чӳречи те авторпах – унта Хĕл Мучи профессине аван сăнарланă. Вунă йĕркеллĕ сăвăра сăнакан ача акă мĕн асăрхать:

*Сивĕ чӳрече çинче*
*Хĕл ӳкернĕ çут тĕнче.*

Çавăн пекех-ши? – ыйтас килет. Сăнарлă шухăш хĕрӳллентерет те ĕнентерет. Пĕчĕк кĕнекерех: таса пĕлĕт, сиплĕ сывлăш, кайăк-кĕшĕк, çулталăк вăхăчĕ, пукане çывратакан тата хуран кукли пĕçерекен те пур, анчах ăна пĕчĕкскер халĕ урамра тăмран ăсталать, амăшĕ пек ĕçчен хĕрача кайран чăннине пĕçерсе çитерме вĕренет унта. Айван кушакĕ асăрханма пĕлмен ачана кантăкпа выляма юраманнине систерет. «Аслати» сăвва вара уйрăмах питĕ килĕштертĕм.

*Аякран шыв пички çĕклесе,*
*Пĕлĕте çиçĕмпе йĕрлесе*
*Аслати çывхарать.*
*Ун сухалĕ хăрушă, хура.*
*Пĕчĕк тусăм, унран ан хăра:*
*Аслати усал мар,*
*Аслати – пархатар.*

Çавăн пекех «Кулине» те ăс пухма тата ĕçе вĕрентет: ахаль сапланçи тума кирлĕ мар иккен, мĕнле çип суйласа çĕлемеллине те пĕлмелле – ăна та сăнарлă кăтартнă. Сарă упана сарă çиппе сапласан килĕшӳллĕреххине сисет ача. ..............

*Хури килĕшмест куçкĕрет,*
*Кĕçех саррине вăл тирет.*

..................

Ирхине тăрсан ачан малтан çăвăнмаллине килти чĕрчун та пĕлет иккен. Урине çăвăнманнине анчăк та курнă, вăл тĕлĕнсе пăхать хĕрача çине.

Ирхине

*Кушакки те шарламарĕ,*
*Урине патне пымарĕ.*
*Хĕрача вара ăнланчĕ:*
*Пит çума лĕп шыв вăл ячĕ.*

«Маринепе пукане» те самаях шухăша ячĕ: сăвă форми, йĕркелени, куплетсем çине пайламанни, йĕркисем пăхсан вăрăм пек, анчах та ытарлă пулни тĕлĕнтерчĕ. Редакторĕ Венямин Петрович Тимаков талантлă сăвăç пулнине куратăн та çавă çеç çаплах хăварма пултарнинчен тĕлĕнместĕн. Унта хĕрача пуканепе калаçниех мĕне тăрать. Ытарлă, сăнарлă калаçса вуланă чухне пукане чĕрĕ чун пек пулса каять. Чĕрĕлĕх сăнарĕпе Марине пуканине тимлесех ыталать, ачашласа чĕркет: шăнасран хăрать.

*Пуканен пит черчен аллисем,*
*Хускалмаççĕ çинçе урисем.*
*Хĕрхенет-çке ăна Марине,*
*Ăшăтмашкăн чĕркет урине.*
*Пукане шăнасран вăл хăрать,*
*Сăпкана çывратмашкăн хурать.*
*– Тĕлĕрмешкĕн, пепкем, вăхăт сан, –*

*Марине калаçать каç пулсан.*
*Пуканен улача кипкине*
*Вăл салтать тăрăшсах ирхине.*
*Пĕчĕкскер çаплипех вăранмасть,*
*Куç уçмасть, пĕр сăмах каламасть.*

Вăт çапла вĕçлени те хитре пуль тетĕп. Эпĕ сăвăсемпе ĕçлеместĕп те Венямин Петрович поэт мĕн калĕ?

Тимаков Венямин Петрович **Хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ паллă та ăста поэт тата филологи наукисен кандидачĕ**:

– Çак малта каланисем тĕрĕсех. Килĕшетĕп. Паллах, çырма пуçланă чухне вĕренмелли нумай. Клавдия вырăсла шухăшлавĕ куçкĕретчĕ. Пĕрремĕш тĕлпулăва та аван астăватăп.

Кĕнеке издательсво çуртне пĕр çамрăк пике алă çырăвĕпе çитрĕ те чăрмантарнишĕн именчĕклĕн каçару ыйтса сĕтел çине сăвă ярăмĕсен чĕркине кăларса хучĕ. Эпир Юрий Григорьевич Айдашпа интересленсех пăхма пикентĕмĕр. Камне вуласа тухсан та ăнланмарăмăр: авторĕ шăппăн тухса шăвăнма алăк уçрĕ те:

– Кам пулатăн-ха? – тесе ыйтсан та

–Чăвашах, – терĕ пуçне чиксе.

– Чăвашла вĕренмен-им? Çырас килсен вĕренме кайма тивет, – терĕм эпĕ вырăсла шухăшласа çырнине сиссе. Кун пек каласан çамрăк пике аванмарланса мар, хăюлланса:

– Аслă математика вĕреннине чĕлхене вĕренме пултарасса шанатăп, – терĕ. Унччен те пулмасть, эпир сăмахланă хушăра вăл тухса та кайнă. Тухса пăхрăмăр та никам та çук. Ун пек автор пирĕн пулман, астумастпăр иксĕмĕр те. Пĕр миçе çул выртрĕ-ши унтанпа, сахалтан та çиччĕ-саккăр иртнех. – Кўренчĕ-ши? Килес çук-ши, – тесеччĕ. Суйласа илмеллĕх пуртан ачасем валли кĕнеке кăларас тесеччĕ-ха кайран.

Тем вăхăтран пике ятне-шывне пĕлтĕмĕр. Пĕчĕккисем валли кăларас тесе сăввисене суйларăмăр. Нумайччĕ ĕçĕ, анчах пурте тўрех кĕнеке валли никамăн та пулаймасть пуль? Уйрăмах вырăсла шухăшласа çырнисенчен хăталтăмăр та пĕчĕк çеç кĕнекелĕх пуçтартăмăр. Килĕшнĕ сăввисенче те ыйтусем пурччĕ-ха:

– Ăçта курма пулать-ши? Епле чĕнсе илмелле-ши? – тенĕ çĕртех авторĕ алăк уçса ячĕ те:

– Ырă кун пултăр пысăк çынсене, чăрмантарнишĕн каçарăр, – терĕ. Чипер чăваш пики манпа пĕрле ĕçлекенсене те килĕшрĕ.

– Эпĕ – анчах çырма пуçлаканни, эсир хушнипе эпĕ чĕлхене вĕренсе килтĕм. Халĕ урăхла çырнине паратăп, – терĕ. Анчах эпĕ унта кирлисене аса илсе:

– Вăл та, ку та пултăр, – терĕм. Суйламаллăх пулсан кĕнекен пахалăхĕ ўсет. Пулса çитнисенчен «Асанне юрри» кĕнеки пуçтартăм та тата

тепĕр кĕнекелĕх илсе юлтăм. 1991-мĕш çулта К. Вишневскаян алă çырăвне йĕркелесе, редакцилесе кĕнеке кăларма патăм.

Тепĕр кĕнеке валли автор вара ай, шайлаштарнă, пурне те пĕчĕк сăвă тунă: çип çапса тӳрĕ йĕр туртнă пек мăшăр куплетлă сăвăсем çырса тухнă. Ытлашши тăрăшман-ши? Хăйĕн стильне те çухатасран хăраман. Кашни сăвви пĕр пĕчĕк шухăшпа тыткăнлать, анчах тепĕр кăшт вăрăмлатни те, хăш-пĕр çĕрте техникине пăхăнни те çук: каять пек туйăнать-ши? Пуçлав çавăн пек ĕнтĕ – темĕн те туса пăхтарать. Çапах та суйламаллăх пурри аван тата К. Вишневская вичкĕн шухăшлавлă пулни, кашни сăввинчех темăна пĕçерсе çитерни сисĕнет, çавăнтах ахальшăн çырни те пур. Ку вăл ĕçленĕ – çырнăçемĕн хăех майлашать-ха: пĕр алла иличчен тăрăшма тивет. Тăрăшакана пулăшас та килет. Ача чĕлхи те, ача чунĕ те çухалманни паха çыраканшăн. Çапла вара Клавдин «Тăм шăхлич» 2-мĕш сăвă кĕнеки хунав ячĕ, анчах кайран ăна мĕнле шăпа кĕтнине пĕлместĕп: ĕç вырăнне улăштарма тиврĕ. Лайăх сăнарлă сăвăсем сахал марччĕ. Çумăр ташши хăех мĕне тăрать. Çырма пуçлакан анчах пулин те çавăн пек характерлă сăнар тума пултарнине ырăпа çеç хакламалла:

*Шăпăр-шăпăр туйăнчĕ,*
*Шăнкăр-шăнкăр илтĕнчĕ.*
*Йăлтăр-йăлтăр курăнчĕ,*
*Чăлтăр-чăлтăр сирпĕнчĕ.*

Мĕн калăн ку сăнар хыççăн?.. Анчах çырма пуçлаканни мар, тахçан çыраканни те асăрхамĕ ун пек хĕрӳллĕ те сăнарлă çумăра. Автора тăнăçлăх кирлĕ, çавăнпа та ăна вăл глобаллĕ сăнарлăхпа мирлĕхе тĕнче шайĕнчех курасшăн: «Миршĕн»

*Çĕр çинчи пур чĕрчунсем,*
*Тӳпери пур кайăксем*
*Çуралаççĕ пурăнма,*
*Çут тĕнчешĕн савăнма.*

*Эпир, пĕчĕк ачасем –*
*Çĕрĕн сумлă хăнисем,*
*Савăнасшăн туслăхра,*
*Тăнăç, ырă пурнăçра.*

Кунта вăл пепкесен ячĕпе çырать. Ку та Вишневскаян хăйне евĕрлĕ сăпатлăх. Тата интереслентерекен калаçу та сăвăлласа йĕркелеме пултарнисем тĕл пулчĕç: «Хурчка»

*– Çăварна – çу, пырна – пыл! –*
*Кăшкăратăп хурчкана.*
*Çакна илтрĕ пулмалла,*
*Тытрĕ кайрĕ шур чăхха.*
*Анне килсен ятларĕ:*
*«Шалча тăрне те», – терĕ.*

*Хурчка урăх пымарĕ,*
*Те аннерен хăрарĕ?...*

Калаçу кăмăлне килекен ыйтусене пама пĕлни ачасен сăввине пуянлатать тата характерлă сăнар тума та пулăшать. Çакна аван сисет сăвăç. «Тевет кăвакалăм» *Тевет-тевет кăвакалăм,*

*Шыв хĕррине васкакан,*
*Ялан чуппа чупакан,*
*Физкультура тăвакан.*
*Мĕн ĕçтернии-çитерни –*
*Эс хăçан пысăкланан?*

Пĕчĕк ача кирек-мĕне те е кама та хăйĕнпе танлаштарать. Çавăнпа та ăна: – Çисен пысăк пулатăн, – тени ялан апатланакан кăвакала пысăк курас килнипе çыхăнтарать çыракан. Е тата ачасен пĕр-пĕрне витлес йăла мĕн ĕмĕртен пынине те пĕлет сăвăç. Акă епле сăнарлать ун пек тăрăмлăха: «Верук»

*– Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕлтĕркке,*
*Çӳç çивĕчĕ – хӳрешке! –*
*Халь кулаççĕ Верукран*
*Кулмалли-мĕн ним çукран.*

*Хĕрача пĕлет йĕрме,*
*Ăнланмасть-çке вăл темме:*
*Чăваш вата-вĕтĕрен*
*Кулма хушнă ĕлĕкрен.*

Ачан шухăш кăна мар, çирĕп ĕмĕт пулнипе пĕрлех пит те тăрăшма – шухăша пурнăçлама пĕлмелле. *Шурă карап тăвас текен*

*Караç выртать шутласа.*
*Тăрать вăл ерипелен:*
*Ĕмĕт курăнмасть тасан.*
*Вăхăтран анасласа*
*Караç илет карăнса.*
*Шухăш пырать пушанса –*
*Карап каять саланса.*
*Карапа шухăшпалах*
*Тума çук иккен ăна.*
*Уншăн пит тăрăшмалла.*
*Караç, туп эс вăй-хална.*

Профессие ачаран суйлама пĕлмешкĕн мĕнле те пулин ĕçе туртăнса та тиенсе пăхмалла. Ачаран ĕçе юрататакан хăйне мĕн кирлине суйласа илме вĕренет. Акă мĕнле хускатать автор «Пулас çĕвĕç» сăвăн темине. Ачана лавккана илсе çитерет те ун куçне уçтарать. Кĕпе-йĕм тăхăнтартман пуканене хĕрача хăйĕн çĕлесе памаллине туять. Ку, тен, пукане илмелли сăлтав пулин те амăшне килĕшсе каять: хĕрачана кирек-мĕн çĕлеме пĕлни килти хуçалăхра

нихăçан та ытлашши пулмасть тата алă типтерлĕхне вĕренет-çке çиппе йĕп тытакан.

*Лавккана кĕрсессĕнех*
*Маруç курчĕ пукане.*
*Хĕрача мĕн курнине*
*Пĕлтерет халь амăшне:*

*– Туянсамччĕ эс, анне,*
*Пукане. Вăл тăхăнман.*
*Эп çĕлем кĕпе-йĕмне,*
*Çиеле – хура сăхман.*

*Амăшне ку килĕшет,*
*Маруç çĕвĕç пултăр тет.*
*Илсе пачĕ пукане:*
*– Çĕле, çĕвĕç пулăн, тен.*

Автор ачан пăсăк кăмăлне те асăрхать, мĕншĕн тесен ун пек чухне вăл мĕн пирки, тен, тумтирĕ килĕшмест, тен, пушмакки пĕчĕккĕ е пысăкрах – ачана хăйне мĕн кирлине е çитменнине тата мĕн сăлтавпа кăмăлсăр пулнине асăрхаттарасшăн. Сăлтавсăрах ачан кăмăл хуçăлма пултараймасть, имĕш.

*Ванюш васкать, каять шкула,*
*Чупать хăй пĕртте савăнмасăр.*
*Йăл-кулă çук мĕне пула?*
*Пушмакĕ хĕстерет ним майсăр.*

*Пăхмасăрах ури çине*
*Вăл тарăхать: мĕскер амакĕ?*
*Класра ăнланчĕ вăл тинех –*
*Ылмаш иккен Ванюш пушмакĕ.*

Стандартлă мар сăвăсем час-часах тĕл пулаççĕ. Ку çырас пĕрпеклĕхрен хăтăлма пулăшать. Сăвă кўлепи те ачана илĕртме пултарать, анчах вăрăм чухне – сăмахран ултă йĕркеллĕ куплет ытлашши йывăрлатасран – автор астума пĕрпек йĕркесем хăварать: «Мăр-мăр тус» сăвăра виçĕ строфан та пуçламăш йĕркисем: *Кушак тусĕ пулмашкăн;* вĕçĕсем –икĕ куплетăн – *Юлташ пулас темерĕ;* шухăша вĕçлекен йĕрки çеç ылмашать –кушакпа туслашма вĕрентет: вăл та апат-çимĕçе суйлама пĕлет, тус пулас тесен ăна ăнланма тивет. Унăн ячĕ те евĕрлев сăмахĕнчен тăрать – *мăр-мăр тус*. Кун пек йĕрке те автор сăмахсене пĕлсе усă курнине тата чăваш чĕлхин грамматикине алла илсе вĕренни çинчен калать.

*Кушак тусĕ пулмашкăн*
*Пĕчĕк çура туянтăм.*
*Ăна маттурлатасшăн*

*Хăймапала йăпатрăм.*
*Кушак хăйма çимерĕ,*
*Юлташ пулас темерĕ.*

*Унăн тусĕ пулмашкăн*
*Услам çу та пуçларăм*
*............*
*Юлташ пулас темерĕ.*

Тĕрлĕ чĕрчун тĕрлĕрен пурăнать, тĕрлĕ майпа тăранать. Кăсăклантаракан сăвă ача кăмăлне килетех. Мĕнле сăнарланă-ха шăшие? Асăрхануллă та вăр-вар çÿрекен пĕчĕкскер пÿлĕме те кĕме пултарать. Шăршласа вăл çимелли шырать, хуралта никам çук пулсан та шикленсех çÿрет – çапла пĕчĕк шăши пурнăçĕпе паллашать пĕчĕк вулакан. *«Шăши»*

*Тĕссĕр тумлă йăрăскер,*
*Васкаса чупаканскер*
*Пÿлĕме шăршлать вăр-вар –*
*Пытанмашкăн кирлĕ мар.*

*Пурпĕрех вăл пытанать,*
*Кушакран асăрханать.*
*Курăнсан вăл хуралта –*
*Шăши тарĕ хăвăртрах.*

Алă çырăвĕсем хушшинче ачасем те, мăннисем те кĕтекен Çĕнĕ çул пур:

*Шак! шаккарĕ кантăкран*
*Çил ачи.*
*Килсе çитрĕ аякран*
*Хĕл Мучи.*
*Вăл тултарнă кучченеç,*
*Пурте халь ăна чĕнеç –*
*Савнă Хĕл Мучи,*
*Хаклă Хĕл Мучи.*

*Ак пуçланчĕ çĕнĕрен*
*Çĕнĕ кун.*
*Çитсе кĕчĕ инçетрен*
*Çĕнĕ çул.*
*Хаклă парнесем парать –*
*Пур чуна савăнтарать*
*Савăк Çĕнĕ çул,*
*Чаплă Çĕнĕ çул.*

Чĕрĕлетнĕ евĕрлĕхе хам та кăмăлларăм, мĕншĕн тесен сăвă ятне вуласанах Хĕл Мучин туйи тÿрех куç умне тухать, малтанах шаккаканĕ

çил ачи çеç пулин те. Хĕрӳллетнĕ сăнар сăвва пăхмасăр калама вĕренме хăвăртрах пулăшасса шанас килет.

Хĕрачасем арçын ачасенчен хитререх те çутăрах курăнаççĕ: тĕрлĕ тĕслĕ тумсемпе. Хĕрлĕрех те кĕпе-тумтир, кăвакрах та атă-пушмак тăхăнма юратаççĕ. Çакна та çыракан асăрханă. Сăвă тума усă курнă сăнар çеç пулин те автор кирек-ăçта та сăвă теми шыраса тупса ăна уçса пама пĕлет: Урине

*Çутă пĕлĕт,*
*Кăвак пĕлĕт*
*Уринен атти пекех.*
*Ак хĕвел тарса пытанчĕ –*
*Пĕлĕт тĕсĕ те çухалчĕ.*
*Хĕрача халь макăрать,*
*Мĕншĕн тесен пит хăрать:*
*Атă юлĕ хуралса.*

«Çитермере» асаилӳ сăвви хĕрӳллĕрен те хĕрӳллĕрех шăраннă. Кама илĕртмĕ вăл? Епле пуян сăнарлăн та ĕнентерӳллĕн янăрать. Хам та çакăн пек сăвă çырнăнах туйăнса кайрĕ çакна вуланă май.

«Çитермере»

*Йăрă хĕрачаччĕ,*
*Выляма аванччĕ.*
*Çур кунне кĕтеттĕм –*
*Эх, çитермине те!...*

*Тĕрлĕ путек-сурăх,*
*Эпĕ хам та урăх.*
*Алăра тутланĕ*
*Çăкăрпа суханĕ.*
*Пушă эп тытаттăм,*
*Çăкăр та параттăм.*
*Путекне çитетчĕ,*
*Сурăхне лекместчĕ.*
*Кĕсьене кĕресшĕн –*
*Çăкăр вăл çиесшĕн.*
*Пĕр кĕтӳ мăн сурăх –*
Çăкăр çуккă урăх.

Автор ĕçе типтерлĕ те асăрханса, япалана ăсталанă чухне ĕç йĕркине пăхăнса тумаллине асăрхаттарать: «Туркай»

*Тăрăшать Туркай чунтан,*
*Вăл тăвасшăн яраплан.*
*Анчах сылтăм çунатти*
*Çыпăçмасть, пулмасть латти.*

*Туркай питĕ тарăхать:*
*Тăрăшни сая каять.*
*Асăрхарĕ вăл тинех –*
*Сĕреймен-çке çилĕмне.*

Ялта ӳснисем пĕлеççĕ: ачасем малтан туссене пухаççĕ, кайран ыттисем вĕсем патне çыпçăнаççĕ. Ял ачисен пурнăçне: вăййине е ĕçне кăтартса сăнарлама пĕлни сăвăçшăн вăл пархатарах. Кĕнекен ятне те çак сăвăранах илес терĕм, кайран та çапла хăварасса шансах: «Тăм шăхлич». Ку сăвва вуласан мĕнле ачан ялта пурăнса тăм çărас килмĕ? Шăхличĕ пирки калама та кирлĕ мар – вăл пуриншĕн те чĕр кайăк пек – пурне те илĕртмеллипех илĕртет.

*Тăм шăхличĕ Алмата*
*Илсе панă пасарта.*
*Кайăк евĕр, тупата,*
*Тю-тю-рю! çеç янрататъ.*

*Ачасем шăхлич курма*
*Пухăнаççĕ ун патне.*
*Тин шутларĕç тăм çăрма –*
*Ăсталасшăн кайăкне».*

*Кашниех сар тăм çăрать,*
*Янраса тăрать çырма.*
*Тăмĕ хатĕр – алăра,*
*Кам пултарĕ майлама?*

*Маттурри вара Партас,*
*Пĕтĕм ача тĕлĕнет.*
*Турĕ вăл шăхлич пит час –*
*Ĕнтĕ «кайăк» ĕнерет.*

Çапла вара кашни ачан хастарлăхне вăратма çырать тейĕн çак çамрăк автор К. Вшнвская. Ун пек пулма кахал çеç пулмалла мар: намăса ярать иккен амăшĕ туса панă минтер – мамăк. Епле хăйне евĕрлĕ шухăшлă сăвă ерипен – пĕчĕккĕн ăнланма пулăшать пĕчĕк вулакана. Çак вăрттăнлăх тепĕр чухне хамăра та, пиçсе çитнĕ сăвăçсене те, çитмест. Мĕн пек кирлĕ те çивĕч сăнар çуратаь пĕр çемçе тĕклĕх, мĕншĕн тесен ăна хаклă та чипер, хитре юратма пĕлекен анне туса панă. Çавăншăнах анне пек ĕçчен пулмалла – «*Епле пулăн-ха кахал*»? – тет сăвăç майлаштарнă тăвату икшер- йĕркеллĕхре. «Мамăк минтер»

*Тутлă ыйхă çытарри –*
*Мамăк – анне пуçтарни.*

*Пулĕ маншăн чи çемçи*
*Чĕрĕ ыйхă кӳленçи.*

*Манăн минтер яланах –*
*Ырă тĕлĕкри ахах.*

*Вăл парать мана вăй-хал,*
*Епле пулăн-ха кахал?*

Алă çырăвĕн ытарлăхĕ тупсăмне пĕлмелли пĕчĕкшер куплетсемпе вĕçленет. Ку та ачасене аталанма, пуçа шутлаттарма кирлĕ пай пулса тăрать. Пуçласа çыракан çакна асăрхани автора пысăк пуласлăх кĕтме кирлĕ, çавăнпа та К. И. Вишневскаяна çутă поэзи çулĕ шанчăклă та хурçă пек çирĕп пултăр тесе ырăлăх та сывлăх сунатăп. Ачасене валли çакăн пек кирлĕ сăвăсем шухăшласа çырма вăй-хăват туптăр. Нимех те çук пек çак тупмаллинче, анчах пĕчĕккине самаях шутлама тивет. Тĕрĕс тупсăма тупатех туйса вуласа аталанакан. «Тупсăмне пĕл»

*Чӳречийĕ тăваттах,*
*Темĕн те пĕр пур унта:*
*Çимелли, тумланмалли,*
*Теттесем, çывăрмалли –*
*Çынсене пурăнмалли.*
*Мĕн пулать-ши çак арча?*
*Халь хуравлĕ хăш ача?*

Унта та ачасем валли кирлĕ çĕнĕ шухăшлă, сăнарлă сăвăсемччĕ, анчах малтанхи стильне ывăтса хăварнăшăн кăшт шеллерĕм те. Çав шухăшах Юрий Григорьевич та каларĕ:

– Çавăнпа пуçласа çыракансемпе питĕ асăрхануллă пулмалла, тӳрех пăрахăçласа, хăй пек тунине хуратса, тепĕр сăвăç пек çырма хистемелле мар çав.

– «Маринепе пукане» сăвва автор епле çырнă, çавăн пекех хăварас терĕм. Ун пеккисем нумайччĕ-ха та, анчах пурне те пĕр кĕнекене чикме çук: е ыттисем ытларах илĕртеççĕ, е кĕнекен калăпăшне те шута илме тивет. Пĕрремĕш кĕнеке валли яланхиллех пуçлакана сахалтарах вырăн параççĕ. Çитменнине шкула кайма пуçламаннисем валли пĕчĕкрех кĕнеке кăларма тăрăшни те кĕнекене пĕчĕклетет. Эпĕ Вишневскаяна çавăн пек илемлĕ ачапча кĕнекисене: «Асанне юрри» редакцилесе тата «Тăм шăхлич» ал çырăвне суйласа пама тӳркилнĕшĕн пĕрре те ӳкĕнместĕп: К.Вишневскаян пултарулăхĕ пысăк, ăспа ĕçченлĕхĕ çителĕклĕ – пулассишĕн, çӳле каяссишĕн ĕмĕтлентĕр çеç.

*Зоя Алексеевна Нестерова*:

– Маттура такăр çул пултăр, – терĕм эпĕ те. Анчах мĕнле пуçласа калам-ши? Ăмсанакан та пур темелле пуль? Тиркес тесен çăмарта

сарринче те ҫӳп тупӑнать тет-и-ха? Акӑ Ӑсан Уҫӑпӗ хурлать ҫак кӗнекене, анчах критика сӑмахне те шухӑшласа тӗплӗн уҫса-тупса нимӗн те палӑртайман хӑй. Кӗнеки мӗншӗн килӗшменнине те калайман. Тупӑнать ҫав ун пек кӗвӗҫ те... Мӗн тесшӗнччӗ-ши? Пуҫласа хӑй мӗнле ҫырнине аван пӗлетпӗр-ха, каласа та параччӗҫ пӗлекеннисем. Ҫавӑнпеккисем кӑна шӑп лараймаҫҫӗ ҫав: кам мӗн хушать, ҫавна ҫеҫ калама пултараҫҫӗ – попугайпа автанпеккисем мар-и? Уҫӑп пек ... вӗҫлес те килмест шухӑша. Хӑй ӑнлантӑр эпӗ мӗн калас тенине. Ентеше хурласа чапа тухас терӗ-ши? К. Вишневскаян амӑшӗ те пирӗн юнашар ялтанах пулнӑ тата Клавдия ҫуралнӑ ялӗ те малтан пирӗн Кпасноармейски районне кӗнӗ. Тивӗҫлипе хакласа – тӗслӗхсемпе хурласа та ырласа панӑ пулсан нимӗн те каламан пулӑттӑм. Хакӗ нимӗнле те мар-ҫке: Уҫӑп хӑй сӑвӑсене пачах ӑнланманнине ҫеҫ кӑтартса парать: пӗчӗк калавсем ҫырнипех тата сӑвӑ пачах ҫырманскер ҫын сӑввисене тӗшмӗртме хӑтланнипех сӑвва пӑрахӑҫлама ҫук ӗнтӗ. Пӗр сӑвӑ ҫырса курман ҫын ҫапла лапӑртатни кӗвӗҫсе курнӑҫланнине ҫеҫ пӗлтерет. Эпӗ сӑвӑсем ҫыркаланӑ, ҫавӑнпа та пӗлетӗп – кашни сӑвва мар, кашни шухӑша епле ҫуратса мӗнле сӑмахсемпе тумлантармаллине. Тертлӗ те йывӑр маншӑн. Тавах ашшӗ-амӑшне Клавдие ҫуратса ӳстернӗшӗн, поэзи ҫулне уҫса парса хавхалантарса пынӑшӑн, мӗншӗн тесен **сӑвӑҫ начар чунлӑ ҫынсенчен ҫуралаймасть тесе шутлатӑп.**

**Пӳлсе калакан Б. Л.Тихонов (Б. Борлен)** та начар калас тесех темле шырасан та тупайман япӑххине. Алтӑр Ҫӑлтӑр мӗнле ҫырнине ҫеҫ килӗштермен, ҫавӑншӑнах «редактор кирлӗ» тесе хут пичетлесех ҫырса панӑ автора. Сӑвӑҫӑн ирӗкӗ пуррине шута илмелле тата вӑл мӗнле сӑлтавпа ҫапла ҫырнине ӑнланмалла. Вӑл вара хӑйӗн ӗҫӗн хакне чакарнӑ пекех туйӑнчӗ – хак пама та чӑн-чӑн сӑвӑҫ пулмалла-иҫ...

Акӑ мӗн ҫырать Борис Борлен Вӗрентӳ отличникӗ – «Каҫхи урамра» та аташма пулать» репликинче:

Кама мӗн ытларах килӗшет ҫав: пӗри ирхи илемпе киленет, тепри сулхӑн ҫапсан, каҫ пулсан, вӑйӑра савӑнать. Ахальтен мар-тӑр ӗнтӗ Клавдия Вишневская хӑйӗн черетлӗ ҫӗнӗ кӗнекине «Каҫхи урам» тесе ят панӑ.

*Каҫ ҫутийӗ пит илемлӗ*
*Алтӑр-ҫӑлтӑр ҫуннӑран:*
*Вӑйӑра эп те телейлӗ*
*Чун савниҫӗм пулнӑран.*

Рифмӑсем чиперех, ритмӗ такӑнмасть... Анчах темӗскер ҫитмест пек Мӗн-ши? Ҫав вӑхӑтрах темӗнле ҫӗнӗлӗх пурри те курӑнсах тӑрать. Ара, Алтӑр-ҫӑлтӑр ҫуннипе каҫ ҫутийӗ илемлӗ пулни ҫинчен ку таранччен никам та ҫырман вӗт. Алтӑр-ҫӑлтӑрне дефиспа ҫырнӑ те... Ку мӗнле те

пулин урăх япала мар-ши? Çав сăнарах Алтăр Çăлтăра пысăкла çырни те пур. *Сутă куçлă çичĕ çăлтăр*

*Çитмĕл çăлтăр пек çисет,*
*Унăн ячĕ Алтăр Çăлтăр,*
*Кашниех ăна пĕлет.* (20-мĕш стр)

Кашниех пĕлме пĕлет те çав пултаруллă сăвăç кăна çичĕ çăлтăр çитмĕл
çăлтăр пек çиçнине асăрхать.
Анчах та çакăн пек асамлă ăсталăха амăшĕ хăйĕн ывăлне парнелесшĕн мар: *Ывăлăм, куçна хупсам,*

*Тутлăн çывăр,*
*Хĕвел анчĕ хĕрелсе,*
*Уйăх тухрĕ тӳпене,*
*Çути ӳкрĕ сан çине*
*Кантăкран.*
*Ырă тĕлĕк тĕлленсе*
*Лăпкăн çывăр.* («Каçхине», 24 стр).

Çав сăвăпа юнашарах:

*Çăлтăрлă пĕлĕт тăвасшăн*
*Каçăн ăшши сĕртĕнет.*
*Хурăн та ырă пуласшăн*
*Акă сим пыл ĕçтерет.*

Ачи çывăрать... Каçăн ăшши сĕртĕнет... Кама кам сим пыл ĕçтерет-ши каçхине? Юратнă мăшăрĕ мар-ши? Ку лайăх-ха ĕнтĕ... Ют çын мар. Тахçан авал пĕр классик намăсланса вăтанса хĕвел анни çинчен çырнăччĕ. Кунта кăшт урăхларах. Акă мĕнле:

*Сар хĕвел кĕренĕ*
*Хупланнă каç чаршавĕпе,*
*Чун савни кӳренĕ,*
*Тухнă вăл кăмăлĕпе.* (26 стр).

Поэзин вăрттăнлăхне тепĕр чух ăнланса ăша хывма çăмăл мар çав. Шăпчăкĕ те шăпланмасăр савăк юрă шăрататать...

*Уйăх та савмашкăн*
*Çӳллĕ ту çине шăвать,*
*Савнине курмашкăн*
*Çамрăк чун-чĕреваскать.*

Ара:

*Ял каччи-тaка,*
*Хĕр пики-путек,*
*Каччи яштака,*
*Хĕрĕ хĕрӳллĕрех.*

Ирĕксĕрех асра юлакан йĕркесем, хĕрӳллентерсех ярăççĕ. Ытлашши хĕрӳлленме юраманнине те автор тӳрех калать:

*Пуринчен те кирлĕрех–*

*Ăслă çын пулни паха.* Тесе пĕтĕмлетет те тепĕр икĕ страницăран хăратсах пăрахать:

«Пĕрисем кулаççĕ, теприсем макăраççĕ, Эпĕ – йĕрекенсен хушшинче..»

Мĕншĕн-ши, автор ăна та каласа парать:

«Каç пулса çитсен
*Тарас килет килтен.*
*Ир пулса çитсен*
*Каяс килмест ĕçе.*
*Çак çылăхлă çĕртен*
*Çĕкленесчĕ пĕлĕте.*
*Анчах уçă сывлăмлă ахах*
*Пулĕ çĕр çинче анчах»* (96 стр).

Ĕмĕчĕсем пур пĕр çунатлă-ха:
*Таса пĕлĕт çăлтăр кĕпипе*
*Каç пуласса кĕтет пек,*
*Нумай пăхса сăнарăм –*
*Мана хăйпе чĕнет пек.* (223 стр).
Таса пĕлĕтĕн çăлтăрлă кĕпине те асăрхать сăвăç. Кашнинех пӳрмен çав кун пек пултарулăх! Ĕмĕчĕсем вара тата та анлăрах.

*Тĕттĕм каç.*
*Çӳллĕ пĕлĕт.*
*Çăлтăр вăй вылять унта.* («Ĕмĕт» сăвă.)

Пыр та калаç, вула та тупсăмне туп: Тĕттĕм каçра çӳллĕ пĕлĕт курăнать, унта вара çăлтăр вăй вылянине курать автор.
Автор, çак тишкерĕве вуласа тухсан, кăштах кӳренессине те туйсах тăратăп. Кун пирки вăл малтанах çырса хунă:
«Ырă çын нумай»
Тенине
Ĕнентĕм.
Эсĕ – ырă мар. (87 стр.)
Ырă çын пулас тесе çырмастăп çак йĕркесене. Авторне кăштах та пулин ырă тăвасшăн, «Каçхи урам» – Клавдия Вишневская сăвăçăн «пурнăç сăввисемпе юрату юррисен пуххин» 1 томĕ кăна-ха. Апла пулсан, 2-мĕш томĕ те кун çути куратех. Çапла пултăрччĕ. Кĕнекен ум сăмахĕнче
(*ăна В. Синичкин 1997 ç. юпа уйăхĕнче çырнă тата 2001 çулти 4-мĕш номерти «Тăван Атăл» журналта «Тасалăх сăввисем» ятлă статьяра хăйнееверлĕ сăнарсем тума пултаракан сăвăç прозаик пулса та сăнарлă та çивĕч шухăшлă аван калавсем çырнине палăртнă. Çавăн пекех К. Вишневская ĕçĕсене философии наукисен докторĕ тата Чăваш искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. А. Исмуков та асăрханă. Вăл унăн «Вĕре çĕлен» тăвата пайлă трагедине тишкернĕ (К. Вишневская. Критика статьисен пуххи. 3-мĕш кĕнеке. 2007*). Сăвăçăн

хайлавӗсене пысӑк хак панӑ. Унта В. Синичкин К. Вишневская аспирантура пӗтернине, критик пулнине палӑртать. Анчах та мӗнле ҫивӗч критик статьисене те, мӗнле ӑста сӑвӑҫ ҫырнисене те камӑн та пулин редакцилемелле, автора пулӑшмалла. «Каҫхи урам» кӗнекен редакторӗ те, корректорӗ те пӗр ҫынах: Иванова К. И. Эпир сӑвӑҫа нимӗн чухлӗ те кӳрентересшӗн мар,
анчах та асӑннӑ редактор-корректор кӑшт тимлӗрех пулнӑ пулсан «Каҫхи урамра» ҫакӑн пек сӑмахсен тупсӑмне тупаймасӑр ҫӳремен пулӑттӑмӑр.

Э. И. Эльф:

– Малтанах манӑн ӗҫсене асӑрханӑшӑн тата вӗсене вуланӑ пирки хӑйсен кӑмӑлӗсене палӑртнӑшӑн тавах аслӑ та хисеплӗ ҫыравҫӑ-ҫыннӑмӑрсене: ялан мухтани те пӑсать. Кирек епле япӑх критика та чунтан каласан ырӑ пулӑшу тӑвать. Асӑннӑ кӗнекесемсӗр пуҫне ытти сӑвӑсен пуххисем те сахал мар, 2-мӗш том пирки те асӑннӑччӗ, анчах унӑн кун-ҫулӗ темле ӑмсанаканпа компьютер хытӑ дискине тӑпӑлтарса кайнипе вӗҫленчӗ, ытти алӑ ҫырӑвӗсене те хӑварман. Ҫапла вара кӑларса пӑрахма илсе кайнӑ-ши е хӑйсен тума шутланӑ-ши?

*«Вӑйли пулмӗ тарҫӑ»* тата *«Чӗн йӗвенсӗр»* аслисем валли ҫырнӑ сӑвӑ кӗнекисем те ҫухаласран васкаса кӑлартӑм. Унта пурнӑҫпа чун кӗрешӗвӗн сӑнарӗсем ҫыраннӑ тесе шутламалла, ҫавӑнпа та вӗсене тӳрлетсе ӗҫлемен – чун ыйтнине хитрелетме кирлӗ мар: вӑл – хӑй пурнӑҫпа калаҫни. Апла пулин те унти сӑвӑ-хыпара аван йышӑнчӗҫ вулакансем. Ӑнланнӑшӑн тавах. Эпӗ унти пӗр сӑвва та ятарласа туса ҫитермен тесен тӗрӗсрех пулӗ, хӑшӗсем пулса ҫитнисем те пур пулин те: мӗншӗн тесен эпӗ ҫырса хунӑ япалана нихӑҫан та куҫарса ҫыраймастӑп: вӑл е пачах урӑх пулать, е ӑна тата курма манӑн кӑмӑл ҫитмест – куҫарса ҫырасси йӑлана кӗмен е ҫапла ӗҫлеме вӗренмен. Ку манӑн пысӑк ҫитменлӗх пулин те... Шӑпах ҫавӑн пек сӑвӑсен ярӑмӗсенчен тӑрать ҫак икӗ кӗнеки те. Ҫапла вара эпӗ хама пӗтерме ӳркенместӗп тени ку. Тар тӑкса ӗҫлемен кӗнеке ҫине ҫити-ҫитми укҫана тӑкма ытлашши шеллетӗп. Вулакансем ҫапла пулнишӗн каҫарчӑр мана. Ятарласа кӗнеке валли ӗҫлемеллисем те пур, сахал мар. Мӗн пурри пултӑрах: шӑртланса, макӑрса нимӗн те ыйтмастӑп, никама та юрама тӑрӑшмастӑп, чи кирли – ҫынсене те, чӗрчунсене те питӗ юрататӑп, нихӑҫан та юратма пӑрахмастӑп – курайманлӑх ман валли мар! Тав тума хатӗр пурне те: пулӑшнишӗн те, «ӳкернишӗн» те – пурте усӑллӑ, пурте кирлӗ: ҫӗр ҫинче кирлӗ мар япала е пулӑм ҫук тесе шутлатӑп. Манӑн ҫунатлӑ сӑмахкаҫмӑшсене хӑйсен е тата урӑххисен пек туса кӑтартакан ҫывӑх пӗлекен, Турцинче сӑвӑ ҫырса Айхи пек палӑрасшӑн ҫунакан пулас сӑвӑҫа та ятламастӑп, мӗншӗн тесен манӑн ҫаврӑмсене усӑ курнӑшӑн пӗрре асӑрхаттарни ӑна килӗшмерӗ, кайран вара манӑн ӗҫсене вӑл: – Ку «паллӑ поэтӑн», унтан татах «ку тепӗр маттуррӑн сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем», – тесе ҫырса



Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-48511

панине вуларăм. Мĕн калăн: паттăрах мар-и? Хăшĕсем çын телейлĕ пуласран хăраса кирек кама та сутса яма е туянма хатĕр, анчах мĕнле илетĕн, çапла çухататăн: – Турă – турпас мар, – тет чăваш, – йăлтах курать... Куртăр, эппин. Эпĕ вара: Турă – тупра мар, вăл усал та кĕвĕç чунпа пурăнмасть, тетĕп. Çавăнпа та туртса илнĕ телей – усрав ачи мар, хистенипе пурăнмасть, килĕшмесен ача та тухса тарма пултарать. Телей вара епле тармĕ? Мĕншĕн тесен телей пек пĕртен-пĕр чуншăн пысăккă та хăватлă пулса никам та, нимĕн те çуралман-ха. Çавăнпа та телей çынпа пурăнма килĕшмест – ăна туйса курасшăн черет тăвакансем патне кăна пĕчĕккĕн курăнса хăнана çеç кĕрсе тухать. Анчах çакна эпир нихăçан та чухласа та, ăнкарса та илеймĕпĕр çав: хытнă та тĕттĕм чунсем мар-и эпир халь? Ăса çухатнипех чун уçăлмасть çав. Пĕтĕм айăпне чунсăр укçа çине йăвантаратпăр. Укçа – усал, теетпĕр. Укçи мар усал, ăна пайласмар текеннисем çынлăхсăр мар-и? Ĕçленĕ тăрăх илекен пур-и халь? Малалла çапла калас килет:

Савăнмалла çеç манăн çунатлă сăмахçаврăмăшĕсем килĕшнишĕн те, çавăнпа ăна вăрттăн усă куракан та тупăнать. Усал мар. Лайăх. Лайăхран лайăх шырамаççĕ, хăйĕн япăххи те çук, пулас. Унпа мĕн чухлĕ калаçса курса та пĕр сăвă та курман. Айхине леш тĕнчене ăсатсан унăн кĕввипе çавăн пек формăллă шăпах темиçе йĕркеллĕ пĕр пĕ-ĕчĕк проза та мар, сăвă та мар япала илтнĕччĕ, анчах пĕрре те пуçласа çыраканăн йĕрне курмарăм – Айхин пекех, вăл вуланă пек туйăнчĕ мана.

– Итле-ха, эсĕ Турцири сăвăçсен хушшинчи призер тетĕн, пĕр сăввине те пулин кăтарт-ха, – терĕм те вăл мана:

– Манпа эсĕ урăх ан калаç ! – терĕ. Патăрьелсемпе калаçма пĕлеймерĕм.

Апла пулсан эпĕ пĕрре те иккеленместĕп – манăн сăмахçаврăмăшĕсемпе сăвăсем те Турцинче пулса курнах. Çавăншăнах мана çук тăвасшăн мар-и? Паллах, автора ун хыççăн мĕн кĕтет? Вăт çапла вăл пулса çитмен, пулса çитесшĕн паттăрлăх – хăйĕн ятне хăпартасшăн мĕн кăна тумасть мар-и? Митта Ваçлейне чыс та хисеп. Унăн фондне ертсе пыракана мĕн лекĕ? Пурăнсан курăпăр? Халĕ пĕрре те иккеленместĕп унти çын чунне çухатнă пирки. Вăл хаçатра ĕçленĕ чухне те эпĕ пĕрре мар ун патĕнче çыракан тусĕсем – пĕрле вĕреннисем – тантăшĕсем кăларнă кĕнекисене мухтаса çырнисене çав çынна хаçатра кăларма панишĕнех тĕпĕпех çухатрăм. Шел!.. Мĕн чухлĕ ĕç!.. Чунсăр çын çеç çапла хăтланма пултарать, ун пек çын та сăвăç пуласшăн пулни питĕ тĕлĕнтерет. Сăвăç тени вăл чун тенипе пĕр килмелле-çке-ха. Чунсăр сăвă çырăнмасть, çавăнпа чунлисенчен шахвăртма тивет пуль-иç.

Алçырăвĕсене те, компьютера ватса хытă диска та пĕтĕм программипех вăрласа кайрĕç... Электроника почтине те ватнă. Кам тума кирлĕ çавăн пек тăрлавсăррăн? Аллине хурса хăварман... Сăвă

кӗнекин 2-мӗш томне тата роман хатӗрленӗ пирки шӑпах пӗрне каларӑм – ун чухне йӗпсемпе радикулит сыватнӑ ҫӗрте тӗл пултӑмӑр ӑнсӑртран. Кайран тепре ҫырма пуҫларӑм та хама та пуҫӗпех сухататчӗҫ патӑрьелсем... Алҫырӑвӗсене те илсе кайрӗҫ. Кӳкеҫри хаҫат редакцинчен те суйса, сӑлтавласа статьяпа Богданкӑра пурӑнакан В.Савинкин хӑтарчӗ. Усалсен йӗрри Богданкӑналлах каять – унтан куҫса килнӗ пирӗн тӑрринче пурӑнакан казачка ывӑлӗсем те ҫавӑнти мафинченччӗ – мӗнле кӑна типшар кӑтартмарӗҫ, халӗ те ҫавӑн пекех, хваттере пӑрахса хӑварма ҫук: камсем кӑна кӗрсе япаласене ҫӗмӗреҫҫӗ, вараласҫҫӗ, алӑ ҫырӑвӗсене вӑрласҫҫӗ – килтен тухса ҫӳреме те ҫук: хыҫалтанах сыхласа ҫӳреҫҫӗ чип-чипер хӗрсемпе яшсем. Мӗн кӑна тумаҫҫӗ Карачура мафинчисем те: кӗсьене е сумкӑна темӗн те пӑрахаҫҫӗ е кӑларса илме те ӳркенмеҫҫӗ. Вӗсем заказ ӗҫӗпе – криминал-риэлтортан е тата пысӑкрах ҫӗртен кирек-кама та хӗрхенес ҫук. Ҫынсен телейне аркатма монополи йӗркелен... Унта пӗринпе калаҫрӑм та вӑл, ирӗк правине ҫухатса «ларнӑскер», Богданкӑран пулнине ҫирӗплетрӗ – ӑна унта хваттерсӗр хӑварнӑ, терӗ. Ҫавӑнтанах теприсем – темиҫе хваттерлӗ.

Пенси пӗчӗккӗ пирки хӑшӗ-пӗри илме килӗшмест: – Путин илтӗр, – тет. Апла пулсан пуян. Ҫав ҫынах хӗрарӑмсенчен кулса кӑна кивҫен ыйтса ҫӳрет е ухмаххисен ҫуртне хупнисенчен илсен каялла тавӑрса памасан та юрать тет-ши? Е хӑйне паттӑр кӑтартас тесе-ши ҫапла ҫынла мар хӑтланать? Хӑй текех этем правине хӳтӗлекен пек пулсах кирек кама та нимӗнле мар, пурӑнмалли правасӑр хӑварасшӑн. Ҫын пек пурӑнса икӗ ача ҫуратса ӳстернӗ пӗрремӗш арӑмне эгоистла варалать. Темӗнле пулсан та хӑй ҫеҫ лайӑх иккен. Усӑ курасшӑн е арӑмӗ ырӑнне хурасшӑн-ши кирек епле хӗрарӑма та? Наполеонла планпа пурӑнать, пулас: кайран хваттерне те, хӑвна та тапӑнтарттарать пуль? Юлашкинчен вӑтӑр пин укҫапа ҫӑлма май пуррине пӗлтерет. Пӗртен-пӗрре чикӗ леш енне кайнине пӗлсенех укҫаллӑ тет, пулас. Хӑй вара Турцинчен тухма пӗлмест. Укҫа пӑсать тени тӳрре килет.

***Ӑса туптаса та унпа танлашса пурӑнма Ҫынна пысӑк та ӑшӑ чун-чӗреллӗ туйӑм та вӑй кирлӗ. Сӑвӑҫӑн вара пушшех те чунлӑрах пулмалла пек, хӑшӗ-пӗри вара пачах – чунсӑрах поэт пуласшӑн, ҫак сӑлтава пулах мар-и эпир пурте туслашса мар, кӗвӗҫсе ҫеҫ пурӑнатпӑр? Ҫынна ухмах ырӑнне хунипех хамӑр ӑслӑ курӑнасшӑн. Курӑнма пулать, анчах та чунсӑр пурӑнса чун сӑвви ҫырма пулмасть.***

Венямин Петрович Тимаков тата Юрий Григорьевич Айдаш епле ҫынсем пулнине калама та кирлӗ мар: ӑшӑ та ҫепӗҫ сассисемпе мӗнле калаҫнине илтнипех чӑн-чӑн поэтсем пулса ҫуралнине туятӑн. Вӗсем вӗренмен ҫынна та усӑсӑр тесе каланине илтмен. Епле тӑрӑшса пулӑшатчӗҫ Саринене: – Ҫырма пурте вӗренсе ҫитеймеҫҫӗ ҫав, пулӑшмалла, – тенине вӗсенчен хамах пӗрре мар илтнӗ. – Эсӗ хӑвах

юса, сана шанма пулать, – тетчӗҫ мана. Ун пирки Зоя Алексеевна та ҫаплах калатчӗ:

– Пӗррехинче Сарине хӑйӗн анчах ҫырнӑ пӗ-ӗчӗк калав-хайлавне пӗрремӗш мана вулаттарчӗ. Эпӗ ку вӑлах пулчӗ-ши тесе хамран хам тӗлӗнтӗм. Нимӗнле шухӑш та, ҫыпӑҫу та ҫук... Каласа кӳрентерме хӑнӑху ҫук ман.

Мана та пачӗ: – Ҫав тери сӑвӑ ҫырас килет-ҫке, – тет. «Анне ҫӑкӑрӗ» вулатӑп ятне. Ытти йӗркисем вара ҫак сӑмах ҫаврӑнӑшӗпе ҫеҫ палӑрса тӑраҫҫӗ. Нимӗнле рифма та, кӗвӗ те, шухӑш тытӑмӗ те ҫук. Анчах ҫырма пуҫланӑ Сывлӑмпи те ҫакнах каларӗ:
– Сарине, темиҫе кӗнеке кӑларнӑскер, манран рифма мӗнле тумаллине ыйтать. Тӗлӗннипе кайсах ӳкеттӗм.

Апла-и те капла-и? Туркай ертсе пыракан профессиллӗ ҫыравҫӑсен Союзӗн пухӑвӗнче Саринепе Уҫӑп Ӑсанӗ тухса тимлесех ҫырса хунӑ хута вуласа ҫынсен ӗҫӗсене тишкерсе тиркерӗҫ. Ун пек те пулать иккен пурнӑҫра.

– Ку мӗне пӗлтерет-ши? Ҫырма вӗренессе мар-ши? – тӗлӗнчӗҫ ҫулпа та ӗҫпе аслӑ та пултаруллисем.

**Юрий Григорьевич Григорьев Чӑваш культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ тата Хисеплӗ ятсене, сахал мар премисене, тӗрлӗ лауреат ячӗсене тивӗҫнӗ талантлӑран та талантлӑ поэт:**
– Клавдия Ивановна Вишневскаяна вӑл литературӑра пӗрремӗш утӑм пуҫланӑранпах аван пӗлетӗп. Эпӗ ун чухне Чӑваш кӗнеке издательство ҫуртӗнче поэзии секцинче консультант пулса ӗҫлеттӗм. Тӗлӗнмелле чиперлӗх унра пур кирек-хӑш енчен илсен те. Вӑл йӑваш та хӑюсӑрччӗ. Вичкӗн ӑсӗ те куҫӗ ҫуталать: сӑвӑ йӗркисенче яланах ӑслӑ шухӑш таса та илӗртекен тема пурри кӑсӑклантаратчӗ. Калаҫни те ыттисенчен пӗр сӑмахпах уйрӑлса тӑрать. Вӑл нумай каламасть – сӑнпа та ӑнланмалла пек, ҫӑмӑллӑн тата ачаш та ҫепӗҫ калаҫать. Малтанах вырӑс сӑмахӗсене ытларах юрататчӗ. Ӗҫченлӗхӗ сисӗмлӗ, хӑтӑлать – чӑваш пикиех, сӑрланса ҫӳренине те курман. Пуринчен ытла малтанхи сӑвӑри «Йӑмра» сӑнарӗ халӗ те пуҫрах. Вуланӑ май *ӑшӑ йӑмра* тени тӳрех пуҫра сӑнӳкерленсе ҫак таранччен асра юлчӗ.
*Ватӑ лӑпсӑркка йӑмра*

*Вӑй вылять-ҫке урамра.*
*Тухмӗҫ савнисем ирччен*
*Ӑшӑ йӑмра айӗнчен.*

2005 ҫул та ҫитрӗ. К. Вишневскаяна курманни, пӗлменни юлмарӗ те пулӗ Чӑваш енре. Куҫарусем те сахал мар унӑн, вӑл куҫарнӑ Марий – Эль юмахӗсене Чӑваш кӗнеке издательствинче пичетленӗччӗ. Ун хыҫҫӑн тӳрех вырӑсла ҫырса ачасем валли «Тише, мыши» сӑвӑсен кӗнекине кӑларчӗ. Ҫырнӑ чухне чӑрсӑрлӑх та пӑхӑнманлӑх кӑмӑлӗ пурри пулӑшать тейӗн автора. Ирӗклӗн вырӑсла шутласа ҫырнӑ

сăвăсене кирлĕ виçесĕр хăварнисене те тиркеме çук, мĕншĕн тесен унта чи кирли – сăнар. «Лучик солнца»:*Марья милая проснулась*
*Из-за луча солнца.*
*Он ведь и к ней заглянул, а?*
*Как сияют ока!..*
Мĕн чухлĕ савăнăç, çавăн чухлĕ экспрессилĕх, çавăнтах хĕвел ĕçĕ – хĕр ача патне паярки кĕрсе ăна ыйхăран вăратнă. Пĕр пĕчĕк предложенирех мĕн чухлĕ сăнар – куçĕсем çиçеççĕ.
«Лошадь»
*– Лошадь – лось, –*
*Подумала Катя.*
*– Все ноги врозь –*
*Работать? Кататься?*
*За ними не угнаться*. Лаша – пăши те чупаççĕ аванах, çын нихăçан та хуса тытаймĕ – çакна Катя ăнланать. Нимĕн çукран сăнар тунă автор лашана пăшипе танлаштарса ăнлантарать.
«Просто так» *Я много что хочу:*
*На всех кричать*
*И мяч катать.*
*Хохотать*
*И лечь в кровать –*
*Просто так.*
*Но в садике нельзя*
*На всех кричать*
*И мяч катать,*
*Хохотать*
*И лечь в кровать*
*Просто так.* Ахаль кăна юрамасть садикре выляма – ачан пĕчĕкрен хăнăхмалла обществăра пурăнма текен авторлă сăнар ачана шухăшлаттармасăрах вулаттармасть. «Братик котенок»
*Ласковый котенок плачет по утрам.*
*Знает мой миленок, ухожу с утра.*
*Я не обижаю, даю молоко.*
*Нежной песней «Баю» слежу под окном.*

*– Котик, кот мой серый, не плачь по утрам.*
*Я приду же первым, скачешь ты ура!*

*Сам, хороший, знаешь, как люблю тебя.*
*Ты как братик важный, плохо без тебя.*
Кушак çури ачашăн чи кирлĕ ырă сăнар пулса тăрать. Вишнвская ăна юратса епле кăна сăнарламасть: çепĕç çура ăна шкула ăсатса та ярать, кĕтсе те илет, çавăнпа вăл та уншăн пысăк та выляма кирлĕ пĕчĕк пиччĕшĕ пек – савăнăçне те пĕрле пайлаççĕ, мĕншĕн тесен ача

та ҫав тери юратса та юрласа ҫывратать хӑйӗн пӗчӗк тусне. Ӑнласах сӑнар тума пӗлекен, поэзие юратса туякан сӑвӑҫ ҫеҫ ҫапла ҫырма пултарать тесе шутлатӑп. Мӗн пӗлнӗренпех пӗр вырӑнта тӑмасть Клавдия. Вӑл чӑваш уйрӑмне университета хӑйне килӗшнӗ тема илсе кайнӑ . Ку преподавательсене хирӗҫ кайнипе пӗрех, ҫавӑнпа та вӗсемпе тавлашсах сӑпка юррисемпе курс ӗҫӗ, ҫав халӑх юррисен ӗҫӗпех диплом ҫырать, анчах Иван Андреев (Ун чухне вӑл чӑваш чӗлхин кафедра пуҫлӑхчӗ. Кам кӑна чӗтремен пулӗ унран?)ӑна тепӗр руководительтен хӑтарса хӑй патне приказпа хистесех илсен чута дипломсӑр хӑварман. Комиссии членӗсем те чӗтресе тӑнӑ унран. Ку темӑнах аспирантурӑра аталантарать, диссертаци ҫырса хӳтӗлеме те ӗлкӗрчӗ, анчах Иван Андреевич аттестат памалла мар тӑвать: сасӑ шутлама хӑйӗн ҫыннисене суйлать – ун патӗнче лаборантсем пулнӑ, вӗсем виҫҫӗ ҫӗрӗмӗш чухлӗ сасӑ ҫитмен тесе палӑртнӑ – К. Вишневская диссертаци проектне комиссии, унта Андреев та пулнӑ, 100 процент таранах йышӑннине те шута илмен.

Эпир издательство ҫуртӗнче паллашнӑ чухне К. Вишневская заводри цехра мастер пулса ӗҫлетчӗ. Тепӗр хут тӗл пулнӑ чухне вӑл – телевиденинче редакторта. Унта манӑн мӑшӑрпа юнашар ӗҫлерӗҫ. Питӗ мухтать К. Вишневскаяна. «Пур ӗҫе те типтерлӗ те юрӑхлӑ кирлӗ пек туса пырать. Ирхи планеркӑри дежурнӑйра та кашни ӗҫе тӗплӗн анализ туса панинчен пурте тӗлӗнетчӗҫ. Кайран К. Вишневская литература критикӗ пуласси телевиденинчен пуҫланчӗ пуль?» – тет Тамара.

Ӑнах та, кашни ӗҫе юратмалла ҫав. Ҫакна К. Вишневская лайӑх ӑнланать. Акӑ эпир пичет ҫурчӗн умӗнче тӗл пултӑмӑр:
– Юрий Григорьевич, салам. Мӗнле Тамара унта сывлать? – ыйтрӗ сӑмах пуҫласа.
– Чиперех-ха.
– Аван. Каҫарӑр та сире чӑрмантарма юрать-и юратса? – ыйтать.
– Юрать, – тетӗп.
– Акӑ, эпӗ «Чунлӑ купӑс» поэма ҫыртӑм та ӑна халӗ театр валли усӑ курма водивель тӑвасшӑн. Пулӑшса, тӳрлетсе, критиклесе илӗр ха,– терӗ.
– Хирӗҫ мар,– терӗм. Вӑл ҫийӗнчех кӗнекине тыттарчӗ.
– Ҫынна ахаль чӑрмантарма аван мар та, – тесе каҫару ыйтрӗ. Илсе кайрӑм вара. Мӑшӑрпа вуласа тухрӑмӑр та шалт тӗлӗнсе лартӑмӑр. Вӑл пӗчӗк сӑвӑсенчен – «Йӑмраран» ял пурнӑҫне кӑтартса пама пуҫланӑранпа поэт ҫеҫ мар, драматург та, сценарист та, критик та пулса кайрӗ: 2001 ҫулта «Сӑнарсем» критика статьисен пуххине кӑларчӗ. Поэмӑна сцена ҫинче кӑтартма май пултӑр тесе тӑрӑшсах ӗҫлерӗ.

Икӗ пайлӑ поэтикӑллӑ «Чунлӑ купӑс» поэма-водевильре Иван ялти ҫамрӑксене валли нимӗн ҫукран купӑс илсе унпа выляма

вĕренет, каçхи яш-кĕрĕме ташлаттарать. Ялта купăс илме мар, пуçа тăхăнмалли илме те укçа пулман ун чухне. Аслă вăрçă умĕн çуралнă çамрăксем ялта ĕçпе кăна ӳснĕ. Иван та çурт, сĕтел-пукан, кăмака тума, тир хырма вĕренет. Çав ĕçсемпе укçа туса, пĕчĕкшерĕн пухса купăс туянать. Укçине пуçтарнă çĕре авланмалли вăхăт та çитсе иртсех каять: савнă тантăш-хĕрĕсем качча кайса пĕтеççĕ. Ватă хĕр те инке арăмĕ çеç юлать ăна валли. Вăл вара ĕçчен инке арăмне суйлать, анчах ватă хĕрĕ, Анна текенни, çав тери кĕвĕçнипе тарăхса нумай хура-шурне кăтартать çак юратуллă мăшăра.

Кашни курăнурах эпиграфпа пуçласа эпилогпа вĕçлени те сăвăç хăйĕн уйрăмлăхне – шыравне кăтартса парать çеç мар, çапла майпа поэмăн шухăшне çунатлă сăнарсемпе – афоризмсемпе уçса шухăш тытăмне кăтартать, вĕсене автор е купăсçă каласа пырать.

*Купăсçă: Пултăр тесен ырă кун*
*Купăспала пултăр чун.*

*Автор: Тĕнчере ыр чун тесен*
*Юрăшăн пулать.*
*Купăс сассине илтсен*
*Йытă та улать.*

*... ... ...*

*Чунсăрри те чунланать,*
*Мĕн каласси пур!*
*Çĕн пăта – хыр хăмана:*
*Çемĕпе çĕклентĕр çурт.*

*... ... ...*

*Савăннине мĕн çитет?..*
*Купăс пулăшать.*
*Ырă туйăмлă пурте –*
*Кăмăл, çи тăша.*

*... ... ...*

*Купăс каласан Атте –*
*Кăмăллă тем пек...*

Линкка-линкка ташлать Анне –
Юратуллă эх!..

... ... ... Атор тĕрлĕрен виçесемпе тата меслетсемпе усă курса малтан поэма çырнă, унран водевиль хатĕрленĕ, мĕншĕн тесен ролĕсем малтанласах хатĕр пулнă тесен те тĕрĕс. Вĕсене содержанинчех курма пулать. Мĕн пулса иртнипе паллаштарса пыраканĕ – автор: ырăлăх, чунлăх кирли çыравçăшăн пысăк вырăн йышăнать. Пысăк чунлă çын кăна мар, этемпе 33 пин çул каяллах пурăнма пуçланă йытă та купăсшăн пулнине, унпа юрланине – вăл чĕр чун та ăнланма пулнине кăтартса парать: кăмăллисем чăнласах музыкăсăр пурăнаймаççĕ. Çавăнпа та çак поэмăн геройĕ – Иван

чăнласах ялта кирлĕ те хаклă çын шутланать, мĕншĕн тесен унăн чунĕ чăн-чăн этемрен – вăл хăйшĕн çеç пурăнмасть, ялти çамрăксене телейлĕ тăвассишĕн авланмалли вăхăтра савнине суйламасăр купăс калама вĕренет, кайран купăс сасси тухма пăрахсан юсакан патне илсе каять. Лешĕ сутса янине пĕлет те тепĕр курмунь илме çывăрмасăр тир хырать, анчах укçа нумай тăвасран ăмсанакан кӳрши, Чине старикĕ, милицине евитлесе тыттарса ярать, çынсене тир туса пама пулнă Ивана конфискаципе нимĕнсĕр хăвараççĕ. Вăл çапах çĕнĕрен купăс илес шухăшпах пурăнать: çывăрмасăр, çын куриччен, çĕрле тир хырса купăс илет. Темĕнле тĕлĕнмелле ăшă кăмăллă çын Иван кӳршине каçарма та хатĕр, анчах ялта купăссăр юлнă пикесем: – Чинене каçармалла мар! – тенĕ. Вара старикăн ывăлĕн туйне купăспа мар, кăмака питлĕхне кашăксемпе çапса çеç ирттернĕ. Çапла Шăнарти яшăсечен ытла хĕрĕсем купăсшăн çеç мар, хуçишĕн те çуннă. Анчах Иван ватăлсан, тепĕр тапхăрти çамрăккисем Аслă вăрçă хыççăн вербовкăпа тухса каяççĕ. Хĕрсем яла юлманнишĕн чăтаймасăр кӳтсе çитнипе шуррăн кĕвĕççе купăссă сăвă-юрă кĕвĕлесе купăспа юрласах ăсатса ярать. 2-мĕш пайри 1-мĕш курăну.

*Чун аманнăран Иван*
*Юрă хывать*

*самантран:*
*Иван: Тинĕсре ишсе çӳреççĕ*
*Шурă çӳçлĕ матроссем.*
*Тинĕсре сире кĕтеççĕ*
*Пĕр-пĕрине кĕвĕçсе –*
*Юратмаллах*
*Пикешĕн чун çуннăçем.*
... ... ...
*Хутлă купăспа çӳретĕп,*
*Каç пулсан тухап вăййа.*
*Мĕншĕн-ши мана тиркетĕр?*
*Хăшĕнпе тăвас туя?*
*Аптрамалла!*
*Саватăп саррисенех.*

*Купăса чунтан саваççĕ*
*Сар чечек пек пикесем.*
*Çавăн пек хама савасчĕ*
*Е ытла та ватă-шим?*
*Аптрамалла!*
*Матрос сире кĕтет-шим?*
... ... ...
Сăвă-юрă вĕçĕнче купăссă хăй мĕншĕн моряк мар-ши тесе те пăхать – апла пулсан Иваншăн çамрăклăх вĕçленет. Пурăнăç та пĕр вырăнта

тӑмасть: вӑхӑт кайнӑҫем ялта пурӑнакансем те улшӑнса пыраҫҫӗ: ҫамрӑксем ҫемйесем ҫавӑраҫҫӗ те аяккалла тухса каяҫҫӗ. Иван юлашкинчен инке арӑмсӑр тата чирлӗ Аннасӑр пуҫне никама та кирлӗ маррине туять. Ҫавӑнпа та ӗҫчен те сывӑ Сонине качча илет, анчах Анна кӗвӗҫнипе татах та усал чирпе сывалмалла марах чирлесе каять.

Автор*: Ват хӗр ларать ватӑлсах*
*Пурӑнсан вӑл ӑмсанса.*

Эпиграфсене те сылтӑм енне ытти йӗркесенчен кӑштах ирттерсе вырнаҫтарнӑ. Кун пек йӗркелени сыпӑк пуҫламӑшне тата вӗҫне палӑртса ытти йӗркесенчен уйӑрма усӑ курать, ҫавӑн пекех пайри курӑну шухӑшӗ мӗн ҫинчен калассине малтанах уҫса кӑтартать тата эпилогпа вӗҫӗ мӗнле шухӑшпа вӗҫленнине пӗтӗмлетет.

*Атор: Хут купӑспа ташласа*
*Кайрӗ чун хӑпартланансах.*

Ҫиччӗмӗш курӑну:

*«Эх! Иван, Эх, Иван!»*

Автор:

*Купӑслӑ хӗрсен сасси –*
*Янӑрать Шӑнар касси.*

Улттӑмӗш курӑну:

Автор: *Вӗҫет ҫӳлте аҫтаха...*
*Шӑнар кӗрлет: – Ӑҫта-ха?..*

Шухӑша кӗскен те витӗмлӗн палӑртакан пуплевсем пурри поэмӑна яррӑн уҫса лирикӑллӑха илемлетме пулӑшаҫҫӗ. Вулакана поэзиллӗ шырав та, илемлӗх те ҫепӗҫлӗх шалтан-шалалла – малаллах чӗнсе поэмӑна вуласа тухма интереслентерет. Клавдия Вишневскаян поэтикӑллӑх хӑйне евӗр, мӗншӗн тесен вӑл чӑнласах ҫитӗннӗ сӑвӑҫ кӑна мар, вӑл драматургинче те хӑйне тупса, унта пулассине кӑтартса парать. Кашни сыпӑкӑн пуҫламӑшӗнче эпиграф пулни вулакана поэма аталанӑвӗн ҫулӗ ҫине ҫыхӑнуллӑн тухма кӑтартса пырать. Ҫавӑн пекех пур эпилог та хӑйӗн тивӗҫне – кашни сыпӑк шухӑшӑн вӗҫне ҫитме, виҫсе илме – пӗтӗмлетме пулӑшать. Водевиль вӗҫӗ те эпилоглӑ ӑнлантаруран тӑрать. Ку вӑл автор ӗҫе поэтикӑллӑ ҫырни ҫеҫ мар, поэма шухӑшлӑ вӗҫне илемлетсе ҫитерни те.

Ытлашши хыт юратнишӗн,
Каҫса кайса шутланишӗн
Турӑ уйрӑм пил памасть,
Тытса купӑс каламасть.

К. Вишневская творчествине ыттисем хакланине те астӑватӑп-ха. Хӑй аван та талантлӑ ҫыракан поэт яланах тепӗр автортан ҫирӗп ыйтать, ҫавӑнпа та Георгий Ирхи те ҫаплах. Хӗрарӑмӑн пӗрремӗш кӗнекине уйрӑмах хытӑ тиркетчӗ вӑл, апла пулин те Вишневская сӑвӑҫ пирки: – Пултаруллӑхне кура пуласлӑхӗ пысӑк, – тетчӗ.

Георгий Иванович Ирхи Чăваш радиора тата телстудинче малтанхи условисĕр йывăр вăхăтсенче вăй хунă чĕрĕлĕхе витĕрех кӳмен асăрхануллă журналист-комментатор литература уйрăмĕн редакцийĕсенче тата тивĕçлĕ канура вилес умĕн «Хыпар» хаçатра ĕçленĕ:

– Чи малтан кала-ха, мĕнле майпа эсĕ юрă влли çыратăн? Манăн темĕнле сăвăсем те пур, поэма таранах, анчах юрă валли пĕр сăвă та çук, – терĕ мана пĕррехинче Ирхи те кĕвĕçсе, те тĕксе юриех анчах çырма пуçланă хĕрарăмăн сăввине радиопа юрăра илтнĕ майăн.

К. И. Вишневская:

– Эпĕ ун чухне хам та пĕлмен, илтмен те. Аристарх Орлов-Шуçăм манăн сăвăсене хаçат-журналсенчен илсе кĕвĕлесе юрра хывнă пулнă. Кайран юрлама Республикăри культура тава тивĕçлĕ ĕçченне – паллă юрăçаТамара Чумакована панă. Çавăн пекех манăн сăвăсене либреттăра та усă курнă. Чун сăввисене килĕштернĕ, анчах мана пĕлмен пирки *Василий Эктель* поэтран манăн сăвăсене илсе килме ыйтнă. Лешĕ мана пĕлмен пирки каламасăр пурăннă. Кайрантан кайран, унпа паллашсан, вăл: – Орлов-Шуçăм юрра хывмалли сăвăсем ширанă чухне журналта санăн сăвăсене килĕштернĕ те тата илсе килме каларĕ, – тесен, эпĕ Орлов-Шуçăм патне кайрăм. Вăл тĕлĕнмелле интеллигент тата çав тери хăйне курнă-курманах, пĕрремĕш тĕлпулурах, юлташла тытма пĕлни тĕлĕнтерчĕ те, хăюллантарчĕ те. Тен, мана хăюсăртараххине курса çапла пулчĕ. Çапах та вăл, талантлăскер, пур çĕрте те палăрнă чаплă композитор хăйне пĕрре те мăнна хуманни, çырма пуçлаканран сăвă ыйтни – мана хăйĕн пек талантлă курас тени пек туйăнчĕ. Вăл хăй те юсама пултарнине сисрĕм, анчах манпа килĕшмесĕр пĕр сăмах та юсаманнине те туйрăм. Çын шухăшне, ăсне çав тери шута илет, арăмĕпе те йĕркеллĕ тытать хăйне – ăслисем кăна çапла пулни паллă. Пĕлмен-туман-курман талант – пирĕн ентешех иккен. Тĕлĕн те, вил те кай! Чăнах – урăх Шуçăма кураймарăм: Вăл вилнĕ. Кĕнекене кĕртсе пĕтермен сăвă-юрăсене те ăçта тупма пулĕ-ши? Музей тумаллăх хатĕрленĕ пĕр пы-ысăк хваттерти пурлăха ăçта ячĕç-ши? Паянхи кун та музей пирки сас-хура та çук. Шуçăм вара хăй каланине питĕ лайăх астăватăп:

– Мĕн пурри – йăлтах музей валли, – терĕ. Фортепьно икĕ-виçĕ тĕрлисем: иккĕшне хăй пухнă – выляса кăтартрĕ, теприне илнĕ; хĕç-пăшал мĕнли кăна çукчĕ – стена туллиех çакса тултарнă. Вĕсене Кавказра дирижерта ĕçленĕ чухне парнеленĕ, имĕш – пĕрне те çухатман, пурне те асăнмалăх упранă. Унти халăхăн тумтирĕсем те темĕн чухлехчĕ... Пĕр Давыдов-Анатрин сăввисемпе кăна 900 юрă кĕвĕленĕ вăл, хăй темиçе пысăк хатĕр папкăсем кăтартрĕ. Халĕ ăçта-ши? Музей тунă пулсан аванччĕ ĕнтĕ. Çав вăхăтра пурнăçĕ-мĕн асар-писерленсе кайрĕ. Мĕн тăвăн? Пурăннă чухне теприсем нимĕн çинчен

те шутламаççĕ, Шуçăм вара шутлаччĕ, анчах вăл шутланине никам та шута илесшĕн пулмарĕ. Шел...

*Георгий Иванович Ирхи* манăн сăвăсене пăхкаласа ларчĕ те (ун чухне телевиденинче пĕрле ĕçлеттĕмĕрччĕ) юсамалли те тупрĕ. Кайран ларсан-ларсан:

– Эпĕ ăнлантăм, эсĕ тĕрĕсех çырнă, юрă валли хамăн та çырса пăхмалла-ха, мĕнле манăн пуçа ун пек шухăш пĕрре те пырса кĕмен вара – терĕ. Хăш-пĕр килĕшмен сăвăсенче пуçне аван марла пăркалатчĕ: пачах килĕшменни пулсан та чăтăмлăн çеç:

– Ун пек çырмалла мар ĕнте, вырăс ачи мар-иç – терĕ чăтаймасăр пĕррехинче. Тепĕр çĕрте вара çак «Кăмăл» пек сăвăсене:

*Кăмăл хăш чух хăçăлать.*
*Хуçăлтăрах,*
*Хăрама кирлĕ мар:*
*Турат мар –*
*Сыпăнать...*

– Ку классика вĕт, ачам, – терĕ те передача валли суйласа илчĕ те:

– Çакăн пек çырмалла сан. Кун пек никам та каламан, каласси манран та пулмасть кăна, – тесе тĕлĕнтерчĕ. Вăл вара çав кун тепĕр хут мана поэт пулма çуралнине ĕнентерчĕ. Тавах ăна ытлашши мăнă пулманшăн. Çав вăхăтра мана вăл кăштах çăмăллăх та пачĕ, мĕншĕн тесен телестудинче пачах вĕренменни те, ĕçекен хĕрарăм та çав вăхăтра çын кирлипе вĕсене тиркемесĕр илнĕ пулнă, вĕсем вара çĕннисене çĕртен пуçласа пуç тӳпи таранах чĕррĕн кăшласа çисех яратчĕç анчах мар, темĕн каласа хăртма та пултаратчĕç. Пирĕн вăхăтра вара конкурс витĕр аланă пире. Хальхи вăхăтра, вĕренмен çынсем сахал пулнă вăхăтри пекех, конкурс та кумма сетки пек çеç туйăнать. Пирĕн вăхăтра кирек ăçта та – вĕренме е ĕçлеме кĕме те пачах та урăхла – чăн-чăн коммунистла конкурссем пулнă. Тавах Çулпуçа пире çавăн пек çул кăтартнăшăн. Унсăрăн эпĕ, тӳрĕ чĕлхе, ниçта та кĕрсе кураймастăмччĕ ĕнтĕ.

– Ăслисем хăрамасăр калаççĕ, вĕсем калаччăрах, пире юрамасть, пире тӳрех пĕтереççĕ, – тенине илтме тӳр килчĕ университетрах. Аран вĕренсе пыраканскер темрен те хăратчĕ. Ыттисене те калаттармастчĕ, пĕр-пĕр явап тытать тейĕн çыншăн. 1990-мĕш çулсенче лайăх вĕренекеннисем, эпир пурте тенĕпекех, аран çеç çăкăр çимелĕх ĕç тупкаласа пурăнтăмăр, вăл вара район администрацийĕ таранах çĕкленчĕ. Пурăнăç кăна мар, çынсем те: тус-тантăш, ял-йыш, тăван-пĕлĕш, ĕçтешсем палламалла мар улшăнса кайрĕç – пĕр-пĕрине «туртсах çурма» пуçларĕç. Ун чухне, кăшт маларах, халăха çимелли-ĕçмелли талонсемшĕн çапăçтаратчĕç, кайран наркота, криминал: рейдерсем-риэлторсем, ĕлĕк юмăç тенĕ экстрасенссем пуçланчĕç... Пĕр-пĕрине гипнозпа вăрçтарса вĕлереççĕ. Тата психикăна туптаканĕсем мĕн чухлĕн пĕр-пĕрне вăрçтарма пăсташ пек туса

çĕрĕпе пăрахса çӳреççĕ. Мĕне кăна вĕрентекен çук? Юмăç япали пек туса сан тумтирсене тăхăнса, сан пек пулса, кӳршĕсен алăк умне тем те пĕр пăрахса çынсене йăлтах вăрçтарса пĕтерчĕç. Тăвансем те пĕр-пĕрине курайми пулса çитрĕç. Тĕрĕс ĕçлекен милиционерсене епле кăна такăнтармаççĕ тата?.. Криминала туртса кĕме криминал туманнине йышăнтарма айăпсăррисен килĕсене доказательство япалисене кайса пăрахаççĕ те улика – вещдок пулать те. Пурнăçа пĕтерсех хучĕç. Никам валли те ниçта та алăк уçмаççĕ – çамрăккисем валли тĕрме тата масар алăкĕсене çеç уçсах хатĕрлерĕç – криминал йышĕ Конституци улăштарма хатĕрленчĕ тейĕн. Ара чиперрисене хупса хураççĕ, хăрушшисене хӳтĕлесе хăвараççĕ. Нумаййисем сахаллисене пăхăнмаççĕ-çке – вăт вара ирĕксĕрех «Меньшинство подчиняется большинству» тени лайăххисем юлман та тенипе пĕрех. Мĕн пулать ку? Шутлама та хăрушă. Чиркӳсенче камсем ĕçленине пĕлсен татах та аван мар пулса каять. Турри çакна курса халăх майлă тăтăрах!.. Ун пек чухне гражданла танмарлăхран тытăнса тăма ирĕксĕрех халăх вăйĕн этемлĕхшĕн тăрăшмалла пулатех. Ăçта вăл Ирхи пек чунпа-ăспа вăйлисем?.. Аяккалла каям мар-ха. Çутă чунлă çын ĕçне вĕçлесе калам-ха.

Пĕррехинче телевиденине Георгий Ирхи Людмила Сергеевна Исаева педагог-çыравçăна чĕнчĕ. Вăл шкулта акăлчан чĕлхине вĕрентетчĕ. Унпа передача хатĕрленĕ хыççăнах çаксем пĕр-пĕрне килĕштернине ăнлантăм. Тен, унччченех те пĕлнĕ-килĕштернĕ, тепĕр чухне вĕсем хула урамĕпе те пĕрле утнине пĕрре мар курнă. Темиçе çултан Ирхин «Кĕл чечекĕм» юрă радиопа янăрарĕ. Вăл ун чухне иккĕмĕш арăмĕпе (творчество çынни марччĕ) пурăнатчĕ, ун чухне 5-6 ача ашшĕ-амăшĕччĕ, вĕсем. Иккĕшĕ те çамрăк курăнмастчĕç.

*Л. Исаева Г. Ирхине* самай чиперлĕхпе лайăх еннелле улăштарчĕ: Георги якалчĕ, çамрăкланчĕ, çĕнĕ çипуç та илсе тăхăнма пуçларĕ, сухалне те ăсчахăнни пек хырмасăр ӳстерсе кĕреçе сухалĕпе мăнаçлăн курăнакан пулчĕ. Унччен вара юратусăрах пурăннă-ши арăмĕпе паллă та пысăк пултаруллă поэт? Е юрату çинчен çырас килмен-ши? Çав тери сăнарлă та илемлĕ поэтикăллă сăвăсем хайлатчĕ. Унăн сăввисене килĕштермен çын çуках. Ăçтан пултăр? Вăл Ухсайпа, Хусанкай вăхăтĕнче туптаннăскер-иç: вĕсем пурăннă чухне ытла çамрăклах вăйлă та пултаруллă, çивĕч те илемлĕ сăнарсемпе лайăх сăвăсем çырма пултарнăран тата поэзине ирех хунав янăран ăна :

– Георгий ирех чаплă сăвăç пулать, – тенĕ çав çӳлте асăннă чăваш халăх прозаикĕпе поэчĕ. Вĕсем каланине тепĕр 20 çултан поэзи секцине çӳрекенсенне, пирĕн, хăлхана кĕртнĕччĕ. Тен, çавăнпа та вăл хушма ятне те Ирхи теме килĕшнĕ, пулас. Такам валли темĕнле чаплă передача çырма пултараканскер, темĕн тума та маттурччĕ. Ахальтен мар физикăпа математика экзамĕнне тытса ман пекех: малтан

энергетика çулĕпе кайнă, аслă математикăна вĕреннĕ, кайран – филолог, журналист. Малтанхи арăмĕпе çуралнă ывăлĕ сăвăç, кайранхинпе ÿстернĕ хĕрне курнăччĕ – медсестра пулса ĕçлет. Çав тери чунлă та çаврăнăçуллăн пулăшу парать чирлисене тата укол тăватчĕ . Эпĕ унпа 2004 çулта мана велосипедист таптаса кайсан хулан 3-мĕш больницин стационарне вырнаçтарсан паллашнăччĕ.

Университетра вĕреннĕ чухне эпĕ Г. Ирхине тата С. Асамат юрăç-сăвăçа 4-мĕш курсра хуса тытнăччĕ. Унтан Асамат татах тепĕр курс хыçа юлчĕ . Вăл радио хорĕнче юрлатчĕ, концерт лартса çÿретчĕ, кайран телевиденине куçрĕ. Çăмăлттай та йывăр лĕпĕш пек купăста çине кăштах та пулин ларса канасшăн пек тÿрккесрех кăтартаччĕ хăйне, тепĕр чухне пан! çапăнакан пăван пекчĕ: каласа хурассипе те, кÿрентерессипе те... Çапах та вăл сасртăк сасăсăр юлнишĕн унăн чунĕ çеç мар ыратнă, ун çине пăхнă чухне хам та юрлама юратнăран манăн та кăмăл хуçăлатчĕ: вăл çынна усал тăвакан çын мар. Вĕсен вĕренме вăхăчĕ, паллах, çитмен. Тепĕр тесен хам та вĕренсе ларман, мĕншĕн тесен пур япалана та вĕреннипе çеç пĕлместĕн-çке – тавçăру та пулмалла, логикăра пуçа ытларах ĕçлеттермелле. Шкулта вĕреннĕ чухне те килте урок туса ларман. Ларнă пулсан, тен, малалла та аван паллăсемпе çеç вĕренме пултарнă. Тепĕр шкула куçарса кайнишĕнех килте урока хатĕрленме пăрахнă эпĕ. Телевиденинче ĕçĕ те конвеер çинчи пекехчĕ: телестудинче е районта кунĕпе чупса çÿремелле, каçхи сценари çырмалла, пичетлесе хатĕрлемелле тата ыт. те. Çав вăхăтрах «хăнисене» палăртса телестуди ертÿçипе тата художество пултарулăхĕн комиссипе килĕшÿ тумалла, çырмалли те сахал-и? Кĕнеке те кăлармалла – кашни сăвва чутлама пултаракан куç хупсах çывăраймасть те пулĕ. Вăт çапла вăл пултарулăх çулĕ – ĕçлемесĕр нимĕн те пулмасть – пулă та пулăçă патне ишсе пымасть. Килĕнче ĕçлеме услови çукран ĕçре юлса çыратчĕ. Тепĕр чухне выçах ĕçлетчĕ мăнтарăн поэчĕ! Нихăçан та пурнăç çине мар, никам çине те кÿренместчĕ, хăй те сăмахпа та, ĕçпе те «çапма» васкамастчĕ. Чăтатчĕ, тÿсме вĕреннĕччĕ темĕн пулсан та. Тĕлĕнмелле таса чунлă поэт пулнине эпĕ хам та халĕ çеç ăнлантăм. Вăл хăйне нихăш енчен те уçса памастчĕ, сăввисене те кăтартмастчĕ: вуланине те илтмен. Унăн кĕнекине илсе вуларăм та вăл маттурринчен шалт хытсах кайрăм. Нумай çырман поэт çапла иккен – кашни сăмаха шутламасăр, чутламасăр çырса хумасть. Хăйĕнче те курăнатчĕ вăл пуян ăсли. Амăшĕ çапла иккен – вырăс хĕрарăмĕ чăн-чăн ял инки пекех, чăвашла шатăртаттарать кăна. Çепĕç те чипер, илемлĕ, хитре сăнлă хăй. Пĕрре кăна курнă, халĕ те манаймастăп. Хăй вара çав тери ватă курăнмасть çулĕпе питĕ аслă пулин те кинĕнчен çамрăкрах курăнатчĕ. Ывăлне чунтан-вартан юратать, уншăн чун-чĕрипе пăшăрханнине систерет. Йывăр тăпрусем çăмăлланччăрах: тивĕçлĕ эсир: иксĕр те ырăсем – çÿлте çÿрĕрех... çынна усал тума пĕлмен, кирлĕ маррине тума

шутламан чунсем. Çынна ырӑ пуласран хӑракансем çеç Ирхи çинчен лайӑх каласшӑн марччӗ, мӗншӗн тесен вӑл ытла та аван çырать-çкеха. Хӑшӗ куçарӑва тепӗр çын хыççӑн туса та хӑйне чаплӑ тесе кӑтартать. Ун пеккине шарламасӑрах паллӑ, вӑл юратмасть, çавӑнпа та Ирхин сӑввисем пичетре курӑнсах каймастчӗç. Тен, хӑй те пичетлеменшӗн кӳреннипе творчество ӗçне кӳлӗнмесӗр те пӑрахса яма пултарнӑ. Тен, чӑваш уйрӑмне вӗренме кайма та вӑхӑт тупайман. Вӗренсе тухсанах ӑна кӗнеке кӑларса панӑ: çапла вара ирех палӑрнӑ Ирхи кӗнекине кӑларнӑ касхи.

1990 çулта Чӑваш кӗнеке издательстви кӗçӗн классенче вӗренекенсем валли Георгий Иванович Ирхинне «Çырмари хӗвел» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ. Унта ачапча валли çырнӑ поэтикӑллӑ сӑвӑсем кирек-кама та вулама илӗртеççӗ. Автор вӗсене ӑспа-чунпа ӑнланса, ачана çывӑх пултӑр тесе çырнӑ. Хӑй те ял ачи пулнӑ май (вӑл Шупашкар районӗнчи Самуккасси ялӗнче çуралса ӳснӗ), ача ӗçне уяса, чун-чӗререн тухакан çепӗçлӗхпе усӑ курса мухтавлӑ та илӗртӳллӗ сӑнарлӑ сӑвӑсем калӑпланӑ. Кашни сӑвӑ – хӑй пӗр ӗç, ӗçӗ – пуян сюжетлӑ пурнӑç. Автор кунта пур япалана та, çанталӑка та сӑнарлӑ кӑтартма пултарнине туятӑн. Акӑ «Тӗтре» сӑвӑ. Вӑл çапла вӗçленет:

*Сар-хӗвел-мӗн тухать –*
*Хӑвалать тӗтрене.*
*Шӑппӑн-шӑппӑн юхать*
*Шур тӗтре.*

*Çуртсене ирӗке кӑларать.*
*Тӳпе янкӑр таса –*
*Çӗнӗ кунӑм сарать*
*Кӑн-кӑвак парӑса.*

Сӑнарлӑ та витӗмлӗ каланӑ. Унтан хитререх епле пулать калама? «Вӑрманта» сӑвӑри çаврӑмсем те хӑйне евӗрлӗ: авторӑн хӑйӗн шухӑшлӑ ярӑмӗ.

*– Ак, паян уяр чухне,*
*Мӗншӗн-ха хывмаççӗ, –*
*Тет вӑл, –*
*Кӑмпасем шӗлепкине?*

Ирхин рифма та ячӗшӗн çеç мар, вӑл унпа сӑвӑн çур шухӑшне, йӗркен туллии шухӑшлавне кӑтартса парать. Вӑл çакна яланах асра ӑста тытни сисӗнет. Сӑвӑри çаврӑмсем рифмӑпа ахаль ритмӑшӑн мар хитреленеççӗ, вӗсем кашиенх кирлӗ шухӑшра тата çавӑн пекех кирлӗ вырӑнта та:

*Асамат кӗперӗ –*
*Тӳпери хӑна.*

*Куранчĕ чиперрĕн*
*Çумăр хыççăнах.*

Лирика ĕнерленĕвĕ шăппăн та чиперрĕн тикĕс шайра: янăрамасăр илĕртекен асамат кĕперĕ куç умне тухса тăрать. Кама кăна илĕртмĕ ун пек лăпкă та сăнарлă сăвă? Ярăмри кашни сăнар пĕчĕккисене çеç мар, аслă вулакана та çăмăллатса, геройсене уçăмлатса кăтартать.

«Пулăри» çаврăмсем те çаплах:

*– Мĕн ку! пирвайхи анчах... –*
*Йăлтăр тĕс вылять питре.*
*Савăнать пĕчĕк ача*
*Чŭхенсен çумри витре.*

Апла пулсан пулли – витрере. Мĕнле телей! Малтанхи кĕнеке – Ирхин телейĕ – савăнăç, киленŭ кŭрет ачасене те, вĕсемпе пĕрле вулакан ашшĕ-амăшне те. Паллах, кĕнекере пĕр шайрăк та çук темелле мар. Хитре те туллии рифмăсем хушшинчех килĕшсех тăманни пур пек. Вăл ман шутпа ун пекки пĕрре çеç. Асăнмасан та пулать, паллах. Анчах ун пек сăнарсене те ярăмсене эпĕ хам та килĕштеретĕп. Час-часах çапла хăварас килет. Çапла Ирхи те хăй кăмăлĕпе килĕшсе çапла хăврнă, пуласах.

*Çичĕ ялкăш тĕслĕ*
*Асамат тĕррин*
*Атăлта пĕр вĕçĕ,*
*Йăршура – тепри.*
*Тĕлĕнеп курсассăн,*
*Ку пĕкки пулсассăн,*
*Улăпăн лаши*
*Мĕнле пулнă-ши?*

Мĕншĕн лаши улăпăн-ши тата? Çапах сăвва, пĕтĕмĕшле илсен, ачана ятарлă шухăшлаттарнă пекех туйăнать. Ку – авторăн ирĕкĕ.

Ирхи ытларах ятсăр сăвăсене кăмăллани сисĕнет. Çапах та ятлисене те хисеплени пур, апла пулсан ят парса вăхăт ирттерменни çеç, тен. Илер-ха «Пултăр кил» сăвва. Хăюллă та илемлĕ калама тулли рифмăсене черетлĕ пусăмсемпе кĕвĕллĕн янратать. Чăнах та ку сăвă ачана шухăша ямасăр пултараймасть. Çыншăн парăннă чĕрене туйма,уншăн чунпа çунма тата ăна чи кирли – кил туса пама ыйтать автор, мĕншĕн тесен вăл хăй те çаплах тунă пулĕччĕ ĕнтĕ, тесе ирĕксĕрех шутлаттарать вулакана.

Акă мĕнле ŭкурчĕклĕн сăнарлать поэт:

*Ан хăратăр çумăртан вăл,*
*Ан чĕтретĕр сивĕре.*
*Туйтăр манпала пĕр танлă*
*Çыншăн парăннă чĕре.*

*Типĕтсе иртет, туятăп,*
*Тарлă çамкана лĕп çил.*
*Улая хуллен калатăп:*
*– Сан та, тусăм, пулĕ кил.*

Йăлтах куç умне тухса тăрать: пурнăç – чĕр чун – кунта йытă, ача тата унăн ĕçĕ. Сăнама, курма, туйма, пулăшма пĕлни пултаруллă сăвăçшăн чи кирли. Пурнăçпа пĕрлех ырă кăмăл, сипетлĕх – çынлăх кирли сăвăри шухăша çирĕплетет, вулаканăн чунне – шалти туйăмне, кăмăллă пулăшу кирлисене манмасăр тĕрлĕрен ĕçпе, кунти сăвăра – йытта йăва – кил туса парса пулăшмаллине хускатать. Çапла вара кĕнекери сăвăсен шухăшĕпе сăнарĕ – кашни ўкерчĕклĕ ĕç сюжечĕ.

Тупмалли


Нестерова З. А. Сăнарăн та хакĕ пур ........................ 1– 5
Тимаков В. П. Хушса калани ...................................... 6 – 13
Нестерова З. А. Начар чунсен сăвăç çуралмасть .............. 13 –14
Синичкин В. В. «Тасалăх сăввисем» 2001 «Тăван Атăл» 4 №.
Исмуков Н. А. «Калăплă калавсемпе трагеди» – К. Вишневская
«Кирлĕ çивĕч сăнарсем» Критика. 2007, 3 кĕнеке.
Тихонов Б. Л. Япăххине шыраса. Реплика ......................... 14 – 16
Эльф Э. И. Компьютерăн хытă дискипе: романа, сăвă
кĕнекин 2-мĕш томне тата ыт. те...................16
«Вăйли пулмĕ тарçă», «Чĕн йĕвенсĕр» –
пурăнăç кĕнекисем .............................. 18
Çынсен телейне аркатма ...... ................ 19
Григорьев Ю. Г. Ирĕклĕ сăвăç вырăсла та... ................. 20 – 24
Вишневская К. И. Аристарх Орлов – Шуçăм «музейĕ» ......... 25
Порфирьев Г. И. тунă сăнар ...................... 26
Асилў ............................................................. 27 – 28
. Ирех палăрнă Ирхи .................................. 29 – 31

Элиза Ивановна Эльф

Кирлӗ ҫивӗч сӑнарсене хаклани
Критика статьисен пуххи

4-мӗш кӗнеке
На чувашском языке

Компьютерный набор В. Д. и К. И. Вишневские
Редактор Э. И. Эльф
Компьютерная верстка А. Ж. Арамян

Подписано в печать 10.05.2016. Бумага офсетная.
Печать оперативная.
Гарнитура Arial сут. Печ. л. 2,0. Тираж 500экз.

Чебоксары, пр. М. Горького, 24.

[illegible]

Подписано в печать 10.05.2018. Бумага офсетная.
Печать оперативная.
Гарнитура Arial cyr., Печ. л. 2,2. Тираж 50 экз.

Махачкала, пр. М. Гамидова, 24